Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ДЕКАБĔР 24 ШАМАТКУН 294 (5107) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРĔСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского. 5. Дом Печати.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактăрăн — 0—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци çекретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—7—97, йалхуçалăх пайĕн — 4—97, советсен пайĕн—0—88, промышленнăç пайĕн—0—85, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

Тĕне хирĕçле пропагандăна бољшевикла организацилемеле

Совет Сойузĕнче паразитла классене, пусмăрпа чуралăха пĕтерне. Çапла пулин те çынсен ăс-тăнĕнче капиталисăм йулашкийĕсем йулнă-ха, вĕсене епĕр йăлтах пĕтерсе çитереймен. Çынсен ăс-тăнĕнче йулнă капиталисăм йулашкийĕсем хушшинче тĕн йăлисем чылай пысăк вырăнта тăраççĕ.

Пирĕн çĕршывра социалисăм татăклăнах çĕнтерсе çирĕпленни, вăл совет халăхĕн кулленхи пурнăç йăлине кĕрсе вырнаçни, хутпĕлменлĕхе пĕтерни, хулара та, йалта та куљтурăпа çутта кăларас ĕçе анлăн сарса йани—çаксем пурте тĕн йăли аталанса пымалли никĕсе хĕстерсе çитерчĕç, ăна тĕппипех пĕтерме кирлĕ условисене пурне те туса пачĕç. Рабочисемпе хресченсем хушшинче тĕне ĕненекенсем кашни çулах сахалланса пыраççĕ.

Чăваш республикинчи ĕççыннисене тĕн сĕрĕмĕнчен хăтарас тĕлĕшпе сахал мар ĕç тунă. Ĕççыннисем хăйсем ирĕккĕн йышăннипе тĕн сĕрĕмĕн вучахĕсене—чиркӳсене, мечетсене нумай хупнă, вĕсен çурчĕсенче куљтурă вучахĕсем: клубсем, шкулсем, библиотекăсем уçнă. Тĕне хирĕçле пропагандă, халăхăн социалисăмла куљтури, политикăлă анланăвĕ çултан çул ӳссе пырать, халăх хушшинчен тĕне хирĕçле пропагандă тата агитаци ĕçне тăвакансем çĕршерĕн, пиншерĕн тухаççĕ.

Анчах та тĕне хирĕçле ĕçри çак çитĕнӳсем парти, совет, комсомол, профсойуз тата обшчĕствăлă организацисен хăшпĕр руководителĕсен пуçĕсене çавăрнă. Вĕсем халĕ ĕнтĕ тĕне хирĕçле пропагандă кирлĕ мар, вăл иртнĕ вăхăтра „çеç кирлĕ пулнă“ текен çĕрĕк шухăшпа пурăнаççĕ. Унашкал руководителсем халĕ пирĕн рабочисемпе колхозниксем куљтурă тĕлĕшĕнчен нумай ӳсрĕç, вĕсене тĕн йăли халĕ йенне çавăраймасть текен йăнăш çул çине тăнă. Çакăн çинчен калать те ĕнтĕ йулашки вăхăтра тĕне хирĕçле пропагандă ĕçне пачах çителĕксĕр туса пыни. Партин пуçламĕш организацийĕсем, профсойуз, комсомол организацийĕсем халăх хушшинче тĕне хирĕçле агитаци ĕçне кампанилĕ, тĕн праçникĕсем умĕн çеç туса пыни те çакăн çинчен калать. Нумай клубсенче, библиотекăсенче, хĕрлĕ кĕтессенче тĕне хирĕçле пропагандă ĕçĕ сӳнсе ларнă.

Вăрçăлла турăсăрсен Сойузĕн организацийĕсем тӳсме çук начар ĕçлеççĕ. Нумай районсенче çав организацисем саланса кайнă, хăйсен активĕсене çухатнă. Çапла Канаш районĕнче Вăрçăлла турăсăрсен йачейкисем колхозсенче пурĕ те виççĕ çеç, хĕрĕх пилĕк колхозра йачейкăсем çук. Парти райкомĕ тĕне хирĕçле пропагандăна хăйĕн ĕçĕ тесе шутламан. Вăрçăлла турăсăрсен организацисене йĕртсе пыман.

Йĕпреç районĕнче те ĕçсем çакăн пекех тăраççĕ. Парти тата комсомол райкомĕсенче ĕçлекенсем районта тĕне хирĕçле пропагандă ĕçĕ мĕнле тăни çинчен нимĕн те пĕлмеççĕ.

Тĕн йăлин йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе пирĕн нумай ĕçлемелле-ха. Чиркӳ çыннисем хăйсен сийенлĕ ĕçне тума пăрахман. Вĕсем кайа йулнă рабочисене, колхозниксене, пуринчен ытла йединоличниксене, тепĕр чухне пирĕн çамрăксене те хăйсен йенне çавăрса илеççĕ.

Пуриншĕн те паллă, партипе комсомол, профсойуз тата обшчĕствăлла ытти организацисем тĕне хирĕçле пропагандă ĕçне туман çĕрте чиркӳ çыннисем хăйсен контрреволюцилĕ ĕçне вăйлатаççĕ, хупнă чиркӳсене уçасшăн агитацилеççĕ.

Чиркӳ çыннисем халăх хушшинче тĕрлĕ майсемпе ĕçлеççĕ. Вĕсем тепĕр чухне йăлти активиссене хăйсен йенне çавăраççĕ. Йехремкассинчи Давыдăв (Елĕк р.) пĕр вăхăтра обшчĕствăлă ĕçре активлă ĕçленĕ, парти членĕн кандидатне кĕнĕ. Анчах ăна поп хăйĕн йенне çавăрнипе Давыдăв ачине тĕне кĕртнĕ. Куславкка, Шупашкар районĕсенче сектантсем, Улатăрпа Парачкав районĕсенче староверсем хăйсен киревсĕр ĕçне тăваççĕ. Парачкав районĕнчи Анастасьевка йалĕнче попсен тăшманла агитацийĕ хыççăн кайса виçĕ хĕрарăм государствă хăйсене—нумай çемйеллĕ ача амăшĕсене панă пособине илме килĕшмен. Кунта партипе комсомол организацийĕсем тĕне хирĕçле пропагандă ĕçне йĕркелес тĕлĕшпе питĕ начар ĕçлеççĕ.

Чиркӳ çыннисем шкула çӳрекен ачасен ашшĕ-амăшĕсем хушшинче те хăйсен ĕçне тăваççĕ. Вĕсем ачасен ашшĕ-амăшĕсене хăйсен ачисене шкула çӳретерме чарасшăн, чиркӳсене çӳретерме хĕсеççĕ.

Сталинла Конституци граждансене тĕне тытма та, çавăн пекех тĕне хирĕçле пропагандă тума та ирĕк парать. Çапла пулин те, тĕне хирĕçле пропагандă тумалли правăпа парти, комсомол, профсойуз организацийĕсем питĕ çителĕксĕр усă кураççĕ. Тĕне ĕненекенсене тĕн сийенĕ çинчен чăтăмлă анлантарассине, чиркӳ çыннисен халăхшăн сийенлĕ агитацине хирĕç, тĕне хирĕçле пропагандăпа агитаци ĕçне бољшевикла сарса ани çук. Пирĕн задачă—тĕне хирĕç бољшевикла пропагандă ĕçне анлăн сарасси пулать.

Партин Сталинла Тĕп Комитечĕ хамăрăн кадрсене, партири тата партире мар бољшевиксене, совет интеллигенцине марксисăм ленинисăма вĕрентсе хĕçпăшаллантарасси çинчен партăн задачă тĕне хирĕçле пропагандă çине йăвашчунла, оппортунисла пăхассине пĕтерме хушать. Çак задачăна пурнăçа кĕртме халăх хушшинче тĕне хирĕçле пропагандăна чăнлипех бољшевикла организацилемеле. «ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕ» тухнă май парти пропагандине йĕркелесси çинчен» ПСК(б)П Тĕпкомĕ йышăннă постановленине пурнăça кĕртсе парти, комсомол, профсойуз организацийĕсен тĕне хирĕçле пропагандă ĕçне бољшевикла йĕркелесси хисеплĕ задачă пулать.

Парти, комсомол, профсойуз организацийĕсен тĕне хирĕçле пропагандă ĕçне йĕркелемеле, Вăрçăлла Турăсăрсен Сойузĕн ĕçĕсене чĕртмеле, тĕне хирĕç коммунисла пропагандăна çӳле çĕклемеле. Тĕне хирĕçле пропагандă ĕçне чиркӳ çыннисен шпионла, диверсилĕ сатăрла ĕçĕсене кăтартмалле, ĕççыннисен революцилĕ сыхлăхне хăпартассипе тача çыхăнтармала.

Тĕне хирĕçле пропагандă ĕçĕнче совет интеллигенцийĕн ролĕ питĕ пысăк. Учител, врач, агроном тата ытти интеллигентсем çине тайăнмала та парти организацийĕсен.

Çакăн пекех тĕне хирĕç лекцисем, докладсем, калаçусем тăвас ĕçе, тĕне хирĕçле хаçат-журналсем сарас ĕçе вăйлатмала Колхозсенчи, хапрăк-савăтсенчи стена хаçачĕсен, районти хаçатсен тĕне хирĕçле статйасем тăтăшах пичетлессине йĕркелемеле.

Тĕне хирĕçле пропагандă ĕçне бољшевикла организацилесси паянхи кун питĕ çивĕччĕн тăракан задачă. Парти, комсомол, профсойуз организацисен çак ĕçе хăйсен аллине илсе, Сталинла Конституци тĕне хирĕçле пропагандă тума паракан правăпа анлăн усă курмала.

Колхозсенче 1938 çулти тупăшсене валеçесси çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Обкомĕ 1938 çулти декабĕрĕн 22-мĕшĕнче йышăннă постановлени

Колхоз стройĕ çĕнтерӳ туннине, йалхуçалăх производствине малта тăракан техникă кĕртнине тата агротехникăлă ĕçсене тунине пула, Чăваш республикинчи колхозсем 1938 çулта, çанталăк йурăхлă мар тăнă пулсан та, тырпул начар мар туса илчĕç. Çапла, сăмахран, Вăрнар районĕнчи Коњцовкăри Сталин йачĕпе тăракан колхоз гектар пуçне вăтамран 95 пăт тĕштырă туса илнĕ, Тутаркас районĕнчи «Хĕрлĕ паттăр» колхоз — гектар пуçне 114 пăт, Шăнкартам районĕнчи «Хĕрлĕ Октябĕр» колхоз — гектăр пуçне ырăш 115 пăт, Канаш районĕнчи «Комсомол» колхоз кĕрхи тулă гектар пуçне 125 пăт туса илнĕ т. ыт. те. Çапла ĕнтĕ, колхоз стройĕн практики çанталăк кирек мĕнле тăрсан та вăйлă тырпул туса илме май пуррине кăтартрĕ. Иртнĕ вăхăтра партипе совет тата çĕрĕç органĕсен руководствинче тăнă тата йалхуçалăхне сăтăр тунă фашисăмăн троцкисла-бухаринла тата буржуалă националисла агенчĕсем пулман пулсан, колхозлă, социалисăмлă уйхирсенчен тырпул тата та ытларах туса илме пулнă. Тăшмансем йурийĕх йалхуçалăх ертелĕн Сталинла уставĕнче кăтартнă пек агротехникăлла ĕçсем туса пырассине пăснă, пуççавранăшне, суртлăхпа вăрлăх ĕçне йăтрантарнă, суртламан, протравить тумасăр вăрлăхсем акнă, колхоз уйхирĕсене органически тата минераллă удобренисем кăларас, тырпула çумкурăксенчен тасатас, култиваци тăвас, кĕрхи çĕртме тăвас ĕçсене аркантарса пынă, ăшăх сухалама вĕрентнĕ т. ыт. те. Çак пур майсемпе те вĕсем тăпра структурине пĕтернĕ, тырпул тухăçлăхне чакарнă, социалисăмла выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе сийен кӳнĕ.

Тĕрĕслӳ материалĕсем тăрăх Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Обкомĕ çакна палăртаççĕ: ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕ кăçалхи апрелĕн 19-мĕшĕнче татăклăн, уççăн кăтартса панă пулсан та, парти райкомĕсемпе пуçламĕш парторганизацисем, райĕçтăвкомсем, советсемпе çĕрĕç органĕсем колхозсенче тупăшсене тĕрĕс валеçес ыйту политикă тĕлĕшĕнчен пысăк пĕлтерĕшлине çаплах кирлĕ пек хакламаççĕ.

Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ, райçĕрĕç пайĕсем, МТС-сем колхозсенче тупăшсене валеçме хатĕрленес ыйтусем тăрăх çителĕксĕр ĕçленĕ. Райçĕрĕç пайĕсем йенчен колхозсене кулленкун йĕртсе пыни çук пирки, нумай колхозсенче шут ĕçне йăпăхтарса йанă, колхозниксем тунă ĕçкунĕсене вăхăтра çырса пымаççĕ, уйрăм колхозсенче ĕçкунĕсене çулталăк тăршшĕпех çырса пыман (Ишлей районĕнчи «Алино» колхозра, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Хĕрлĕ çалтăр» колхозра ийуљрен вара ĕçкунĕсене çырса хуман).

Хăшпĕр колхозсенче колхоз производствине çыхăнса тăман ĕçсемшĕн ĕçкунĕ шутласа параççĕ, çавăн пек, Тутаркас районĕнчи «Хĕрлĕ Октябĕр», «Майăн 1-мĕшĕ» колхозсенче колхозниксене ĕçкунĕ вăрман хатĕрленĕнче тата Канаш—Шупашкар чукунçул строителствинче ĕçленĕшĕн шутласа панă.

Йалхуçалăх ертел уставне пăснисем пулнине палăртнă: ертел членĕсенех, ĕçкунĕ шутласа панисĕр пуçне çав ĕçшĕнех тата укçан тӳлеççĕ, тĕслĕхрен: Ишлей районĕнчи «Алино» колхозра, Хĕрлĕ Чутай колхозĕнче шоферсене ĕçкунĕ шутласа панисĕр пуçне тата ĕç укçи укçан тӳлесе тăраççĕ.

Колхозниксене тыррăн тата укçан аванс парассине нумай колхозсенче колхозниксем ĕçлесе тунă ĕçкунĕсене хисепе илмесĕр тăваççĕ.

Вăрмар районĕнчи Хурий колхозĕнче ревкомиççи председателне ĕçкунĕ колхоз председателĕпе тан шутласа параççĕ, çакă вăл ĕçкунĕсене вырăнсăр салатса пĕтересси патне илсе пырать.

Чылай колхозсенче колхоз правленийĕсем пĕрлехи пуху çирĕплетмен сметăсем тăрăх расход тăваççĕ, колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсем ирĕк памасăрах укçасене пĕр статйаран тепĕр статйана куçараççĕ. Çакăн пек Вăрмар районĕнчи—«Социалисăм», «Чăваш Хресченĕ», Шупашкар районĕнчи—«Хĕрлĕ флот», Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Хĕрлĕ Чутай», «Прогресс» колхозсенче тунă.

Йалхуçалăх ертел уставне çакăн пек пăснă фактсем вĕсем, пуринчен ытла, чылай колхозсенче ревизи комиççисем ĕçлемен пирки, йалхуçалăх ертел уставне пăснисене хирĕç кĕрешмен пирки пулаççĕ (Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Буденный йачĕпе тăракан колхозра ревизи виçĕ çулталăк хушшинче пĕре те пулман, Канаш районĕнчи «Хĕрлĕ путиловец», «Производитель» колхозсенче 1938 çулта кĕнĕренне пĕр ревизи те пулман).

Райкомсем, райĕçтăвкомсем, райçĕрĕç пайĕсем, МТС-сем, комсомол райкомĕсем, республикăри пе районсенчи хаçатсем колхозсенче тупăшсене валеçес, колхозниксене государствă умĕнчи обйазателствăсене тултарма мобилизацилес, 1939 çулти çуракине кăтартуллăн иртерме хатĕрленес, йалхуçалăх ертел уставне пăснисене хирĕç кĕрешес ыйтусем тавра массăллă-политикăлă ĕçе çителĕксĕр туса пыраççĕ.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б) Парти Обкомĕ йышăнаççĕ:

1. Колхозсенче тупăшсене валеçсе пĕтермелли срук йанварĕн 15-мĕшĕчен пулмала тăвас. Тупăшсене 1939 çулти йанварĕн 1-мĕшĕчен тунă ĕçкунĕсене шута илсе валеçмеле.

2. Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, парти райкомĕсене, райĕçтăвкомсене колхоз правленисене пурне те тупăшсене валеçес ĕçе тĕплĕн хатĕрленме, тупăшсене йалхуçалăх ертелĕн уставĕ тата ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕ «Колхозсенче укçалă тупăшсене валеçесси çинчен» йышăннă постановленине çирĕппĕн пăхăнса валеçмеле тума хушас. Çакна пурнăçа кĕртме пур колхозсенче те колхозри пĕтĕм продуктăсемпе укçалă тупăшсене тĕрĕс тата туллин хисепе илес ĕçе организацилемеле, колхоз правленисен финанса хуçалăх ĕçĕсене тĕрĕслесе тухмала. Колхозниксен ĕçкĕнекисем çине ĕçкунĕсене тĕрĕс шутласа çырнине тĕрĕслемеле, колхозниксен ĕçлесе тунă пĕр ĕçкунĕ те сайа каймала ан пултăр, çавăн пекех, тĕрĕс мар шутласа хунă пĕр ĕçкунĕшĕн те тӳлемеле ан пултăр.

3. Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, райçĕрĕç пайĕсене, МТС-сене—колхозсенче тупăшсене валеçес ĕçе организацилес ыйту тăрăх пĕтĕм районри колхоз правлени тата ревизи комиççи председателĕсене, счетоводсене инструктаж пама хушас, колхозсене пулăшма квалификацилĕ шутĕç работникĕсене йамала, колхозсенче тупăшсене валеçес ĕç мĕнле пынине кулленкун контроль тума тăмала. ПСК(б)П райкомĕсемпе райĕçтăвкомсен инструктаж вăхăтра туса иртернине тĕрĕслесе тăмала.

Колхоз правленисене тупăшсене валеçмелли ведомăçа колхозниксен пĕрлехи пухăвĕ çирĕплетнĕ хыççăн, колхозниксене ĕçкунĕ тăрăх тыррăн тата укçан тивекен пĕтĕм тупăша пилĕк кун хушши срукра парса пĕтерме хушас. Кашни колхозрах укçалă тупăша ӳстересси çинчен ыйту сӳтсе-йавмала тата дебиторла парăмсене пĕтерме кирлĕ мерăсем йышăнмала.

Прокуратурă тата судпа следстви органĕсене колхозсем хуçалăх организацийĕсемпе ытти организацисенчен шырăса илме панă ĕçсене вунă кунлăх срукра пăхса тухма хушас.

4. Тупăшсене валеçĕсси авăн çапса пĕтерниччен тата колхозсем государствă умĕнчи обйазателствăсене тултарниччен нумай килнине шута илсе, парти райкомĕсемпе райĕçтăвкомсене, МТС-сен директăрĕсене çаксене тума хушас: вунă кунлă срукра пур колхозсенче те авăн çапса пĕтермеле, тырă тăратмали, натурплатă тӳлемели, кивçен илнисене тавăрса памали обйазателствăсене тултармала, контрактаци догăвăрĕсем тăрăх памали ытти йалхуçалăх продукцисене (утă, йĕтĕн продуктисем т. ыт. те) парса татмала.

5. Пур колхозсенчи ревизи комиççийĕсене те колхозсен правленисен çулталăк хушшинчи пĕтĕм хуçалăх тата финанс ĕçĕсене тĕплĕн ревизи тума хушас, ку ĕçе йалхуçалăх ертел уставĕн 25-мĕш пунктне çирĕп пăхăнса ĕçлесе, 1939 çулти йанварĕн 1-мĕшчен туса пĕтермеле.

6. Йалхуçалăх ертел уставĕн 15-мĕш пунктне, колхозри вăтам показателрен çӳлерех показателлĕ бригадăсен членĕсене ĕçкунĕсем хушса парасси çинчен тата колхозри вăтам показателрен пĕчĕкрех показателлĕ бригадăсен ĕçкунĕсене пĕчĕклетесси çинчен калакан пункта пĕлтĕр пур колхозсенче те мар пурнăçа кĕртнине шута илсе, çĕрĕç органĕсене çакна тума хушас: йалхуçалăх ертелĕн çак требованийĕсене тĕп-тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пырасси çине уйрăмах тимлĕн пăхас пулать.

7. Улăм-арпа тавраш сыхласа усрани тата унпа лайăх усă курни кăçалхи çул колхозсенчи выљăх-чĕрлĕхе тата колхозниксем уйрăммăн усă куракан выљăх-чĕрлĕхе пăхса усрас ĕçре татăклă вырăн йышăнса тăнине шута илсе, çĕрĕç органĕсемпе колхозсен правленийĕсене çакна тума хушас: выљăх апачĕсене салатса пĕтерме тата пăсма памала мар, зоотехниксем, агрономсем урлă кашни колхозрах улăм-арпа тавраш лайăх усă курмалли мелсем туса хатĕрлемеле, выљăх-чĕрлĕхе тăрантарма кашни уйăх валли графиксем туса хумала, колхозсенчи пĕрлештернĕ выљăх-чĕрлĕх ваљљи çителĕклĕ апат уйарса хуна хыççăн йулна пĕтĕм выљăх апатне колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх, ĕçкунĕсен хисепне çирĕппĕн астуса валеçсе памала.

8. Вăрнар районĕнчи çĕрĕç пайĕн заведуйушчине Смирнов йулташа, Парачкав районĕнчи çĕрĕç пайĕн заведуйушчине Желудков йулташа, Тутаркас районĕнчи çĕрĕç пайĕн заведуйушчине Мосейĕв йулташа тата Çĕрпӳ районĕнчи çĕрĕç пайĕн заведуйушчине Григорйĕв йулташа вĕсем колхозсенче тупăшсене валеçме хатĕрленес ĕç çине кирлĕ пек тимлĕхпе пăхманни çине, Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе Обком колхозсенче тупăшсене валеçес ĕçсем пирки материалсем тăратма хушнине пурнăçа кĕртменни çине кăтартса парас.

9. Парти райкомĕсене, райĕçтăвкомсене, районсенчи çĕрĕç пайĕсене, МТС-сене тата колхозсен правленийĕсене çакна ăнлантарса парас: тупăшсене валеçес ĕçсем 1939 çулти çуркуннепе хатĕрленес тĕлĕшпе стахановла ĕçе сарса йанипе пĕрле — вăрлăх фончĕсем хывнипе тата ăна тасатнипе, йалхуçалăх машинисене хатĕрленипе, минералла удобренисем кӳрсе килнипе тата вырăнти удобренисене хатĕрленипе, пысăк тухăçлă тырпул тума, выљăх-чĕрлĕхсене пысăк продуктивлă тума май паракан пур ĕçсене те туса хатĕрленипе пĕрле; 1939 çулшăн производствăлă тата финанс планĕсене тунипе тата уйрăм хуçалăхлă ĕçхресченĕсем колхозсене çĕнерен кĕнипе пĕрле пулса пымала.

10. ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Обкомĕ партипе совет органĕсене: тупăшсене валеçес ĕçре администрациленни тата колхоз демократине хĕсĕклетни пулмала мар тесе уйрăмах асăрхаттараççĕ тата çакăнпа пĕр вăхăтрах çакна тума хушаççĕ: колхозсен средствисене саккунсăр йĕркепе расходлакансене, çавна туни вăл колхоз ĕçне тăшманла сутни тата халăх тăшманĕсене пулăшни пулать тесе шутласа, çирĕппĕн айăпламала тата уголовлă йĕркепе ответ тыттармала.

11. Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тата ПСК(б)П Обкомĕ: колхозсенче тупăшсене тĕрĕс валеçни тата йалхуçалăх ертелĕн Сталинла уставне çирĕппĕн пурнăça кĕртсе пыни вăл—колхозсене организацилле хуçалăх тĕлĕшĕнчен малалла татах çирĕплетмелли тата колхозниксемпе колхозницăсен куљтурăлă та пуйан пурнăçне малалла татах хăпартмалли тĕп услови пулса тăрать, çакă вăл пирĕн социалисăмла тăван çĕршывăн хăватне татах ытларах тĕреклетет, тесе шутлаççĕ. Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тата ПСК(б) Парти Обкомĕ пур колхозниксемпе колхозницăсене те аслă Сталинăн çулсеренех 7—8 миллиард пăт тĕштырă туса илесси çинчен калакан лозунгне пурнăçлассишĕн кĕрешсе, стахановла ĕçлесе пырса колхозсенче тата лайăхрах та пуйанрах пурнăç тума чĕнеççĕ.

ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ **А. СОМАВ.**

ПСК(б)П Обкомĕн çекретарĕ **А. ВОЛКАВ.**

ВЧК—ОГПУ—НКВД 21 çул тултарнă йатпа савăнăçлă лару

Ĕнер, декабĕрĕн 23-мĕшĕнче, Чăвашсен Академилĕ театрĕнче, ВЧК—ОГПУ—НКВД 21 çул тултарнă йатпа Шупашкар хулинчи парти, совет, профсойуз организацисен савăнăçлă ларăвĕ пулса иртрĕ. Савăнăçлă ларура НКВД работникĕсем пулчĕç.

Савăнăçлă ларăва ПСК(б)П Обкомĕн тата хула комитечĕн пĕрремĕш çекретарĕ А. Волкăв йулташ сăмах каласа уçрĕ.

Савăнăçлă лару хисеплĕ президиума партин тата пĕтĕм ĕççыннисен çулпуçне тата учителне Сталин йулташа, Молăтăв, Калинин, Ворошилăв, Кагановия, Жданăв, Андрейĕв, Микойан, Йежов, Хрушчов, Берийа, Димитров, Телљман, Хозе Диас йулташсене тăвăллăн алă çупса суйларĕ.

ВЧК—ОГПУ—НКВД 21 çул тултарни çинчен пысăк та тĕплĕ доклад Чăваш АССР Шалти ĕçсен Халăх Комиссарĕ Коњакин йулташ туса пачĕ.

Коњакин йулташ доклачĕ хыççăн савăнăçлă лару халăхсен çулпуçĕ Аслă И. В. Сталин йулташ патне, Советсен Аслă çĕршывĕн правителствă пуçлăхĕ В. М. Молăтăв йулташ патне, ССР Сойузĕн Шалти ĕçсен Халăх Комиссарĕ Л. П. Берийа йулташ патне салам йама йышăнчĕ.

Ĕçлев кĕнекисем памала тунине ĕççыннисем ырлаççĕ

Пĕтĕм Совет Сойузĕ тăрăх, ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ „Ĕçлев кĕнекисем памала тăвасси çинчен“ йышăннă постановленине сӳтсе-йавасси сарăлса пырать.

Ĕççыннисем çак постановленине чĕререн ырлаççĕ, мĕншĕн тесен вăл ĕç дисциплинине хăпартма, ĕç вăйĕ пĕрмай улшăнса тăнине пĕтерме пулăшать.

Мускаври Сталин йачĕпе тăракан пур цехсенче те правителствă „Ĕçлев кĕнекисем памала тăвасси çинчен“ йышăннă постановленине вуласа кăтартнă. Рабочисем: тӳрĕ ĕçлекен работниксемшĕн ĕçлев кĕнеки—хисеплĕ граматă вырăнче пулать, теççĕ.

Правителствă Ĕçлев кĕнекисем памала тăвасси çинчен йышăннă постановленине Мускаври Дзержинский йачĕпе тăракан Хĕрлĕ йалавлă Трехгорнăй мануфактурăра ĕçлекен рабочисемпе служащисем пурте пĕр шухăшлă пулса ырлавă. Вĕсем: Ĕçлев кĕнекисем рвачсемпе прогулшчиксене хирĕç кĕрешмели чи тĕрĕс мел пулать, теççĕ.

Ленинградри предприйатисенче Ĕçлев кĕнекисем памала тунă йачĕпе митингсемпе калаçусем пулса иртнĕ. Кирăв йачĕпе тăракан „Електросила“ савăтра ĕçлекенсем: ку постановлени ĕç дисциплинине çирĕплетет, теççĕ.

Тбилисири 2-мĕш çĕвĕ хапрăкĕнче ĕçлекенсен коллективĕ Ĕçлев кĕнекисем памала тăвасси çинчен йышăннă постановленине хапăл тунă. Цехсемпе бригадăсенче çак постановленине питĕ тимлĕн вулаççĕ, хастаррăн сӳтсе-йаваççĕ.

Правителствă постановленине ытти предприйатисенче те хавас лăн йышăнса илнĕ.

(ТАСС).

Калаçусем çĕнĕрен пуçланнă

Чехословакипе Венгри хушшинче çĕнĕ чикĕсене татăклăн палăртас ыйту тăрăх пулнă калаçусем, автономлă Словаки правителстви пуçарнипе, пĕр вăхăтра чарăнса ларнăччĕ. Венгри правителстви Чехословаки чиккинче декабĕрĕн 19-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусем пирки пăшăрханни çинчен пĕлтернĕ хыççăн, çак калаçусем тепĕр хут çĕнĕрен пуçланнă.

(ТАСС).

Чиано Будапештра пулни çинчен

Парижра тухакан чылай хаçатсем Италин йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Чиано Будапешта кайнă пирки малтанах шутласа хунă шухăшсем пĕтĕмпех тӳрре тухнине паллă тăваççĕ.

„Епок“ хаçат: „Итали министрĕ Венгрине пĕтĕмпех „Рим—Берлин тĕнĕлĕ“ çумне хутшăнтарма пултарчĕ“, тесе çырать. Венгри çакăнтан пуçласа малашне ĕнтĕ çак тĕнĕл политикине тытса пырать. Венгри часах Лигă нацирен тухса „Коминтерна хирĕçле“ пакт йенне куçса ӳкет. Вăл Германипе хирĕçесси пĕтрĕ ĕнтĕ. Германине хирĕç тăма шутлани вăл, уйрăмăнах, Польшăпа пĕр чикĕ тума хăтланса пăхнинче питех те уççăн паларчĕ. Çакăн вырăнне вара Римпа Берлин малашне Венгрине хăйĕапе кӳрĕш çĕршывсен территорийĕсем çине хапсăнас ĕçре пулăшма пулаççĕ. „Венгри уступкă тăвасси,—тет малала хаçат, — çак уступкă ăна Триан догăвăрне анлăн ревизи тума май парăран пулнă. Румынире Венгри çыннисем нумайăн пурăнаççĕ, çавăнпа та ун çине малашне Германи йенчен те, Венгри йенчен те тапăнма пуçлаççĕ. Йугославире те Венгри ăна пайан-пайан пайласа пĕтерес ĕмĕте сухатманнине пĕлеççĕ“. (ТАСС).

Франци правителствине майлă 291, хирĕç 284 сасă пулнă

Франци правителстви „финанс саккунĕ“ текен саккун кăларнă. Çак саккун Францири ĕççыннисемпе халăхăн вăтам сийĕсем çине налог тĕлĕшпе çĕнĕ йăвăрлăхсем хурать. Франци палатин депутачĕсенчен нумайăшĕ правителствăн çакнашкал ĕçĕсене хирĕç пулса калавă. Çакна май, депутатсен палатин декабĕрĕн 22-мĕшĕнче пулнă ларăвĕнче, правителствă хăйне палатă шанма пултарасси çинчен ыйту лартнă.

Парижран пĕлтернĕ тăрăх, правителствăна шанассине майлă пулса 291 сасă, хирĕç 284 сасă панă, 34 депутат сасăламасăр тăнă.

(ТАСС).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Обком пленумĕн решенине пурнăçлар

ПСК(б)П Обкомĕн II-мĕш пленумĕн решенийĕсене сÿтсе-явас ыйтупа çак кунсенче Хĕрлĕ Чутай районĕнчи коммунисcен пухăвĕ пулса иртрĕ.

Хĕрлĕ Чутай районĕ республикăра кая юлса пыракан районсенчен пĕри. ПСК(б)П Обкомĕн II-мĕш пленумĕнче Канаш парторганизаци ĕçĕнче палăртнă çитменлĕхсем Хĕрлĕ Чутай районĕнче те сахал мар. Район государствăна тырă тăратас плана 88 процент, çĕрулми тăратас плана 50,6 процент, аш-какай тăратас плана 84 процент, IV-мĕш кварталти укçа-тенкĕ пухас плана 50 процент кăна тултарнă.

Ку çитменлĕхсем районта партилĕ-политикăлă ĕçсене начар организациленинчен тата тăшмансен юлашкисене хирĕç çителĕксĕр кĕрешнинчен, сăтăрла ĕçсен юлашкисене пĕтерес тĕлĕшпе мĕшелти ĕçленинчен килеççĕ.

Халăх тăшманĕсем районри тĕрлĕ учрежденисене кĕрсе ларса чылай вăхăт хушши сăтăрла ĕçсем туса пурăннă. Вĕсен явисене çĕмĕрсе тăкнă пулсан та, тăшмансен хÿрешкисене, сăтăрла ĕçсен юлашкийĕсене пĕтерсе çитерменха.

Райçĕрĕç пайĕнче Ленинградский пулнă. Вăл сăтăр тăвакансене пулăшса пынă. Хăшпĕр колхозсенче ялхуçалăх ертелĕн уставне киревсĕр пăснă, ĕç дисциплинине çемçетнĕ, сÿсмен таврашĕсене колхозниксене салатса панă. Райçĕрĕç пайĕ колхозсенче приходпа расход сметине пурнăçлас ĕçре йĕртсе пыман. Çавăнпа ĕнтĕ „Красные Тоганаши" колхозра вак-тĕвек япаласем илме сметăпа 500 тенкĕ йышăннă пулсан 3 600 тенкĕ расхутланă.

Суту-илÿ организацисенче халĕхи вăхăтра 31 пин тенкĕ растратă шутланать. Ку организацинче ĕçлекенсем тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен юлашкисене начар пĕтерсе пыраççĕ-ха. Хăшпĕр лавкасенче халĕ те сахăр, махоркă, супăнь çук.

Государствăна ялхуçалăх продукчĕсем тăратас ĕçре кая юлса пыни Хатĕрлевсен Халăх Комиссариачĕн районри уполномоченнăйĕ Льабуков юлташ çителĕксĕр ĕçленипе пулнă. Вăл хăйĕн агенчĕсен ĕçне куллен тĕрĕслесе пыман, вĕсене ĕçлеме вĕрентмен.

Пуçламĕш парторганизацисен ĕçĕнче те çитменлĕхсем нумай. Сăмахран, Пантăкри пуçламĕш парторганизаци партилĕ-политикăлă ĕçе начар организацилени. Çавăнпа Пантăк ялсоветне кĕрекен ялсем государствă умĕнчи обязательствăсене вăхăтра тултармасăр кая юлса пыраççĕ. Кунта ĕçлеме пултаракан коммунистсем те чылай. Акă, Йердукова юлташ—ялсовет председателĕ, Кузнецовă—пуçламĕш шкул заведуючийĕ, парторг Антипăв—туллимар вăтам шкул директорĕ пулса ĕçлеççĕ. Ĕçлеме кирлĕ условисем çителĕклĕ. Анчах кунти коммунистсем ялти актива мобилизацилеме пĕлни çук. Çавă пĕтĕм ĕçе кансĕрлесе тăрать.

Çав пухурах Пĕтĕм Союзри халăх переписне ирттересси çинчен те сÿтсе-явреç. Халăх переписне ирттересси политикăлă пысăк ĕç. Перепис çинчен ĕççынисене лайăх ăнлантарса парса, перепиçе кĕмесĕр пĕр çынна та хăвармала мар,—терĕç тухса калакансем.

Сÿтсе-явнă ыйтусене пурнăçлас тĕлĕшпе районри пур коммунистсене те пирлĕн ĕçлеме чĕнчĕ пуху.

С. Федăрăв.

ПСК(б)П Хĕрлĕ Чутай райкомĕн инструкторĕ.

Сăлпуçĕнчи пуçламĕш парторганизаци ÿсĕмĕсем

ТĂВАЙ. Сăлпуçĕнчи Кирăв ячĕпе тăракан колхозри пуçламĕш парторганизацинче (парторг З. Тимофейĕв юлташ) партин тăватă членĕ тата пĕр кандидат тăраççĕ. Кусемсĕр пуçне тата пĕр сочувствующи пур.

Кăçал пуçламĕш парторганизацие тĕреклетес, йыша ÿстерес йĕнĕпе парторганизаци пикенсех ĕçлет. Халĕ икĕ юлташа парти кандидатĕнчен парти членне куçарнă. Вĕсенчен пĕри 56 çулхи колхозник—Александр Антонăв. Вăл колхоз председателĕн заместителĕ пулса ĕçлет. Хăйне хушнă ĕçсене яланах вăхăтра пурнăçласа пырать. Сысна ферми пуçлăхне Васильĕв юлташа пуçламĕш парторганизаци парти членĕн кандидатне илнĕ. Çавăн пекех сочувствующине кĕме хатĕрленнисем те чылай. Васильĕвă Фекла колхозра ĕнесем пăхать, Иванов Йегор тăваттăмĕш бригадăн бригадирĕ. Вĕсем хăйсен пĕлĕвĕсене ÿстерессех пыраççĕ. ПСК(б)П уставне вĕренеççĕ. Вĕсене коммунистсем вĕренме пулăшса пыраççĕ.

Пуçламĕш парторганизаци çумĕнче коммунистсемпе комсомолецсенчен агитколлектив организациленĕ. Вĕсем час-часах калаçусем туса ирттереççĕ. Ку ĕçсене туса пыма колхозăн парткабинечĕ пулăшать. Парткабинетра колхозниксене тĕнчери лару-тăру çинчен каласа параççĕ, партипе правительствă йышăннă постановленисене вуласа ăнлантараççĕ.

Парторганизацинчи коммунистсем пурте общественлă ĕçе активлă хутшăнса ĕçлеççĕ.

Анчах пуçламĕш парторганизаци комсомол организацине кирлĕ пек йĕртсе пымани пысăк çитменлĕх пулса тăрать. Ялта 21 комсомолец. Комсомолецсем ПСК(б)П историне харпăрхăй тĕллĕн вĕренме тытăнман.

Коммунистсем стена хаçачĕ çине çырса тăмаççĕ. Кун пирки ПСК(б)П Чăваш облаç организацин XIX-мĕш конференцийĕ ПСК(б)П облаç комитечĕн отчочĕ тăрăх йышăннă резольуцире те аван каланă. Конференци решенине пурнăçа кĕртмеле.

В. Иванов.

Отчотпа суйлав пухăвĕ хыççăн

Палтайри (Йетĕрне р.) вăтам шкул çумĕнчи комсомол организацийĕн ĕçĕ отчотпа суйлав пухăвĕ иртнĕренпе чылай аванланчĕ. Комсорг М. Петров юлташ комсомолецсене уйрăм поручениcем парса ĕçе хутшăнтарать.

Чи лайăх комсомолецсем халь пионер вожатăйĕсем пулса ĕçлеççĕ. Комсомолец И. Кутузăв стрелковăй кружока йĕртсе пырать; кружок членĕсем „Ворошиловский стрелок" значокне илме нормăсем параççĕ.

Комсомолецсем вĕренÿре малта пыраççĕ. Çергейĕв, Комаров комсомолецсем пур предметсемпе те хорошо тата отлично отметкăсемпе вĕренеççĕ.

Малашне комсомолецсене пурне те, çамрăк комсомолецсене те, ĕçе ытларах явăçтармала, пур комсомолецсем те отлично вĕренсе пырассишĕн кĕрешмеле.

М. Аниçимăв.

⁂

Йĕпреç районĕнчи Крупская ячĕпе тăракан колхоз çумĕнчи комсомол организацийĕ колхоз çамрăкĕсем хушшинче аван ĕçлесе пырать. Çамрăксем комсомол организацийĕ тавра ытларах пĕтĕçеççĕ.

Октябĕр уйăхĕнче организацире 7 член пулнă пулсан, халь 12 члена çитрĕ. Çамрăк комсомолецсене тата комсомола кĕме хатĕрленекенсене ПСÇЛКС программипе уставне вĕренес ĕçре комсорг Высокăв юлташ пулăшса пырать.

Комсомол организацийĕ çумĕнчи кружоксем те юлашки вăхăтра аван ĕçлеме пуçларĕç. Комсомолецсем государствă умĕнчи обязательствăсене тултарас ĕçе те активлă хутшăнаççĕ.

Н. Семенăв.

Совет Союзĕ тăрăх

●● „Хĕрлĕ Октябĕр" савăт коллективĕ (Сталинград) декабĕрĕн 21-мĕш тĕлне хурçă шăратса кăлармалли çулталăк планне тултарнă. Вăл мĕн-пурĕ 730 тоннă лайăх металл шăратса кăларнă.

●● Витебскри Кирăв ячĕпе тăракан станкостроительнăй савăт 12.317 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларса çулталăкри плана тултарнă.

●● Ленинградри çĕвĕ çĕлекен „Большевичка" хапрăк кăçал 47.014 пин тенкĕлĕх, хĕрарăмсене тата ачасене вальли пальтосемпе коçтюмсем çĕлесе кăларнă. Çулталăк планне пĕтĕмпех тултарнă. Çавăн пекех, РСФСР Вырăнти промышленнăç Халăх Комиссариачĕн „Ростовуголь" тресĕ те çулталăк планне тултарнă.

●● Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи пулă тытакан колхозсем кăçал пĕр мĕльюн центнер ытла пулă тытнă, вĕсем çулталăк планне 111 процент тултарнă.

Кольцовкăри (Вăрнар р.) вăтам шкулта.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: вĕренÿри отличниксем Рая Васанина тата Шурка Васанин.

Г. Костин фото-ÿкерчĕкĕ.

Вулав çурчĕсен отчотлă кампанине йĕркеллĕн ирттерер

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕ йышăннă решени тăрăх, 1938 çулхи декабĕрĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа 1939 çулхи январĕн 25-мĕшне çитиччен Чăваш республикинчи вулав çурчĕсен отчочĕсем пулса иртмеле.

Пирĕн республикăра юлашки отчотлă кампани 1937 çулта февральпе март уйăхĕсенче пулса иртнĕ. Вулав çурчĕсем колхозниксем умĕнче отчот туса панă хыççăн, ялти политикăлă çутĕçĕ чылай лайăхланни палăрчĕ.

Отчотлă тапхăрта пирĕн Совет çĕршывĕн пурнăçĕнче питĕ пысăк улшăнусем пулчĕç. Епĕр çак вăхăтра Сталинла Конституци тăрăхчи малтанхи суйлавсене ирттертĕмĕр. ССР Союзĕн, РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйланă вăхăтра пирĕн вулав çурчĕсем ялти агитацинĕ пропагандăн центрĕсем, культурă вучахĕсем пулса тăчĕç. Анчах нумай вулав çурчĕсем, суйлавсем иртнĕ хыççăн, хăйсем çĕнтерсе илнĕ çÿлĕ вырăнтан кайала шуса анчĕç, хăйсем тунă çитĕнÿсемпе ĕç опычĕсене малашнехи ĕçре çирĕплетсе пыраймарĕç.

Вулав çурчĕсен ĕçĕ юлашки вăхăтра япăхланни хăшпĕр районри çутĕç пайĕсем тата районри партипе совет оргăнĕсем халăх хушшинчи политикăлă çутĕçне хаклăманнинчен те килнĕ.

Уйрăмăнах Шăмăршă, Куславкка, Канаш районĕсенчи вулав çурчĕсем япăх ĕçлеççĕ.

Çак районсенчи райçутĕç пайĕсен пуçлăхĕсем пĕтĕм политикăлă çутĕçне инспекторсене шанса панă та хăйсем ку йĕнĕпе нимĕн те туман, вĕсем пĕр вулав çуртĕнче те пулман, вулав çурчĕсене кайри плана тăракан ĕç тесе шутланă. Акă, Куславкка райçутĕç пайĕн вăхăтлăх пуçлăхĕ Васильĕв юлташ ялти политикăлă çутĕçне йĕркелес тĕлĕшпе Çутĕç Халăх Комиссариачĕ янă отношенисемпе методикăлă çырăвĕсене пĕр папкă ăшне купаласа çеç ларнă. Райçутĕç пайĕнче политикăлă çутĕç йĕнĕпе ĕçлекен инспектор 1938 çулхи апрел уйăхĕнченпех çук. Районра хăшпĕр çĕрти вулав çурчĕсем избачсемсĕр лараççĕ. Нумайĕшсем хĕллене кĕтсе илмен, вутă çук. Чашламари вулав çуртне хутма пăрахни икĕ ерне çитет ĕнтĕ.

Нумай колхозсенче халĕ клубсем пур, вĕсенче вулав пÿлĕмĕсем уйăрнă. Анчах, каламалла, клубсен ĕçне те чылай çĕрте йĕркелемен. Вĕсем йĕ пушă лараççĕ, йĕ юлхавса, тĕссĕрленсе кайнă.

Акă, сăмахран, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Кĕчкей ялĕнче лайăх клубах, хуçа ăшăтман пирки, хупă ларать. Йĕтĕрне районĕнчи Шемертен вулав çурчĕ иртнĕ çулсенче колхозниксен ялта чи юратнă культурлă çурчĕччĕ, халĕ кунта нимĕнле культурлă-массăлă ĕç те çук.

Вулав çурчĕсем отчотлă кампанире халăх умĕнче екзамен тытаççĕ. Ĕççынисем вулав çурчĕсен отчочĕсене итленĕ хыççăн ялти культурлă-массăлă ĕçе мĕнле йĕркелемелине, вулав çуртне мĕнле лайăхлатмаллине кăтартса парĕç, вулав çурчĕпе халăх хушшинчи çыхăнăва çирĕплетсе пыма вĕрентĕç. Халиччен чылай вулав çурчĕсем халăхран татăлса кайнă, хăйсен халăх умĕнчи ответлăхне маннă.

Партипе совет тата комсомолпа профсоюз организацисем вулав çурчĕсен отчотлă кампанине лайăх йĕркелесе ирттермеле. Çутĕç оргăнĕсен çакă политикăлă пысăк ĕçе куллен çирĕп йĕртсе пымала. Кашни вулав çурчĕн пуçлăхне вулав çуртĕнчи культурлă-массăлă политикăлă ĕçе йĕркелеме, вулав çурчĕ тавра колхозниксемпе интеллигенци хушшинчен пултарулă актив пĕтĕçтерме татăклăн пулăшмала.

Отчотлă пухусем вулав çурчĕсен ĕçĕсенчи çитĕнÿсемпе çитменлĕхсене тĕплĕн кăтартса парĕç, вĕсене ялти культурлă-массăлă политикăлă ĕçĕн чăн-чăн центрĕсем пулса тăма пулăшĕç.

Н. Гаврилăв.

Политпросвет ĕçĕн методикăлă кабинет пуçлăхĕ.

Çитĕннисене вĕрентес ĕçре хĕллехи вăхăтпа туллин усă курар

ТРАК. Районри çутĕç пайĕ хутпĕлменнисемпе хут сахал пĕлекенсене çулсерен пĕрер хут шута илсе тухать те лăпланса ларать. Хальхи вăхăтра çитĕннисене вĕрентес ĕçе пĕр ялта та кирлĕ пек йĕркелемен.

Пĕтĕм районĕпе илсен, хут пĕлменнисем 720 çын, хут сахал пĕлекенсем 1 430 çын шутланаççĕ.

Районри çутĕç пайĕн пуçлăхĕ А. Гурьĕв юлташ хутпĕлменлĕхе пĕтерес ĕçе пĕтĕмĕшпех çутĕç пайĕн инструкторĕ И. Веселов çине тÿнтернĕ. Ку ыйтупа райĕçтăвком та, парти райкомĕ те сахал интересленеççĕ.

Ялсовечĕсем ытларах учительсем çине шанаççĕ, хăйсем йĕнчен вĕсем, чылайĕшĕсем, ку тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ тесен те тĕрĕс пулать. Сăмахран, Албахтинăра хут пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсем 103 çын, Чатукассинче 177 çын шутланаççĕ, анчах вĕсенчен халĕ пĕри те ниçта та вĕренмест.

Çавнашкалах допризывниксене вĕрентес ĕçе те районра начар йĕркеленĕ.

Хутпĕлменлĕхе пĕтерес ĕç вальли уйăрнă укçа-тенкĕпе ялсовечĕсем йĕ пачах усă курмаççĕ йĕ ăна таçта урăх çĕреле салатса пĕтереççĕ. Районĕпе илсен, ку укçа-тенкĕрен кăçал 20 процентчĕпе çеç усă курнă. Карай, Шурçырма тата ытти ялсовечĕсем хутпĕлменлĕхе пĕтерес ĕçе пĕр пус та хывман.

Профсоюзпа комсомол организацисем те ку ĕçрен пачах айăкра тăраççĕ.

Политикăлă ответлă ĕç çине çакнашкал пĕр ответсăр пăхсан, вăл ĕç татах кая юлма пултарать, хĕллехи вăхăтсем пушах иртсе кайĕç, епĕр татах нимĕн те тăваймасăр юлăпăр.

А. Киçельов.

ЙĔТĔРНЕ районĕ. Палтай ялсоветне кĕрекен ялсенче пайанхи куна çитсе те çитĕннисене вĕрентме тытăнман. Хут пĕлменнисен йышĕ пĕтĕм ялсоветĕпе 50 çынтан та иртет.

Сăмахран, Буденный ячĕпе тăракан колхозра хут пĕлменнисем 12 çын, хут сахал пĕлекенсем 48 çын шутланаççĕ. Вĕсене вĕрентме иртнĕ çул пĕрре тытăнса пăхнăччĕ, анчах ялсовечĕпе колхоз правленийĕ ку ĕçе тимлесе пăхман пирки, чĕрĕлнĕ ĕç сÿнсе ларчĕ. Унтанпа çулталăк та иртрĕ ĕнтĕ, çапах ку ĕçе çĕнĕрен пуçарасси çинчен никам та шухăшласа пăхмарĕ.

Районри çутĕç пайĕ те хутпĕлменлĕхе пĕтерес йĕнĕпе кирлĕ пек ĕçлемест.

М. Аниçимăв.

ИШЛЕЙ. Районра хут пĕлменнисем 537 çын, хут сахал пĕлекенсем 1 200 çын. Анчах çак явăр цыфăрсем районри партипе совет организацисене сахал хускатаççĕ пулас. Пайанхи куна çитсе хут пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсене вĕрентме ниçта та тытăнман.

С. Мамайĕв.

РЕДАКЦИРЕН. Хутпĕлменлĕхе пĕтерес ĕç япăх пыни çинчен калакан çигналсем пирĕн редакцие çакă çÿлте асăннă виçĕ районран уйрăмах нумай килеççĕ. Партипе правительствă хутпĕлменлĕхе пĕтерес йĕнĕпе панă çирĕп кăтартусене çак районсенчи партипе совет тата профсоюзпа комсомол организацисем халĕ те хак памаççĕ пулас. Государствăн политикăлă ответлă ĕçĕ — хутпĕлменлĕхе пĕтерес ĕç çакăн пек вăраха юлса пынине урăх нимĕнле сăлтавпа та ăнлантарса пама çук.

Летунсене, прогульщиксене, рвачсене, кахалсене хирĕç вăйлă кĕрешÿ пуçарар!

Шупашкарти Ленин ячĕпе тăракан ертелти алăстаççен сĕнÿвĕсем

Рабочисемпе служăщисем, специалиссем, профсоюз работникĕсем тата хоçайствĕнниксем ĕç дисциплинине çирĕплетес тĕлĕшпе панă, хаçатсенче пичетленсе тухакан сĕнÿсене предприятисенче, учрежденисенче анлăн сÿтсе-яваççĕ.

Декабĕрĕн 22-мĕшĕнче çав сĕнÿсене сÿтсе-явас ыйтупа Шупашкарти Ленин ячĕпе тăракан ертелти рабочисемпе служăщисен пухăвĕ пулса иртрĕ.

Пайан епĕр çав пухура тухса каланисене пичетлетпĕр.

Епĕр хамăршăн ĕçлетпĕр

И. Г. НАУМĂВ
Производствă пуçлăхĕ

Пирĕн аслă Совет Союзĕнче пĕтĕм пурлăхсем, пуянлăхсем ĕççыннисен аллинче. Промышленнăçра, транспортра, ялхуçалăхĕнче, халăх хуçалăхĕн пур участкисенче те тÿррĕн, тăрăшса ĕçлени вăл—хамăрăн пурнăç условисене лайăхлатсах пырассишĕн, культурлăха çĕклессишĕн, социализмла тăван çĕршывăн хăватне тĕреклетессишĕн кĕрешни пулать. Акă мĕншĕн епĕр, совет ĕççыннисем, производствă интересĕшĕн тулли кăмăлпа тăрăшса ĕçлетпĕр.

Анчах сахал ĕçлесех государствă укçине ытларах илме тăрăшакансем пур. Вĕсем—прогульщиксем, летунсем—производствă дезорганизатăрĕсем. Пирĕн ертелте те производствăна дезорганизацилекенсем чылай тĕл пулаççĕ. Бандина Кирйанăв прогулсем тăваççĕ. Хăшпĕр рабочисем, работницăсем ĕçе вăхăтра тухмаççĕ. Ĕçе ÿсĕр пуçпа тухнисем те час-часах пулаççĕ. Çапах та вăл çынсем ку таранччен ертелтех юлаççĕ. Çитменнине тата вĕсем государствă паракан пулăшусемпе ыттисемпе, тÿррĕн, стахановла ĕçлесе нормăна ялан тултарса пыракан рабочисемпе тата работницăсемпе пĕр тан усă кураççĕ. Çакнашкал йĕркене пĕтермеле. Тÿррĕн ĕçлекенсемпе прогульщиксем, летунсем хушшинче уйрăмлăх тумала. Çавна тума ку таранччен пулнă ĕçлев тата социаллă страховани саккунĕсенчен хăшпĕрне улăштарни кирлĕ.

Прогульщиксемпе летунсем часчасах хăйсене никампа улăштарма май çук çын вырăнне хунипе витĕнме пикенеççĕ. Пирĕн ертелте ĕçленĕ Орловпа Губанова ĕçрен кăларса янă чухне вĕсем „епĕр кайсан ĕç чарăнать" тесе шутлаччĕç. Пурнăçра пачах урăхла пулни курăнчĕ. Вĕсене кăларнă хыççăн ĕç хăвăртрăн малала карĕ. Ноябĕр уйăхĕнче лайăхрах ĕçлерĕмĕр. Ку факт прогульщиксемпе летунсене хирĕç пĕр хĕрхенÿсĕр кĕрешсе пыни—ĕç дисциплинине çирĕплетме, производствă ĕçне лайăхлатма май пани çинчен калать. Çакна пирĕн ялан асра тытмала.

Йăвăр çын пулнипе отпуск парас срука чакармала

А. В. БЕЛЬАКОВĂ
Çĕвĕç ученицă

Совет влаçĕ ача амăшĕсене пысăк пулăшу парать. Ачасене лайăх пăхса ÿстерме мĕн кирлисене пурне те туса панă. Ача садĕсем, ясльсем нумай пирĕн. Хĕрарăмсен пурнăçĕ тĕпрен лайăхланчĕ.

Çаксене хисепе илсен хĕрарăмсене йăвăр çын пулсан 4 уйăх отпуск пани ытлашши. Вăл срука кĕскетсен хамăршăнах пысăк усă пулать. Çавăнпа епĕ „Правда" хаçатра нумай хĕрарăмсем отпуск срукне чакарасси çинчен каланипе килĕшетĕп, ырлатап.

Йăвăр çын пулнипе отпуск парас срука чакармала тунипе пĕрлех, отпуск памалли çирĕп йĕрке тусан тĕрĕс пулать. Çирĕп йĕрке туни государствă укçине тивĕçсĕр илме ăмсанакансене пÿлме май парать. Хальхи вăхăтра государствă укçине тивĕçсĕр илекенсем пур-ха. Акă, пирĕн ертелте йăвăр çын пулнипе отпуск илнисенчен 9 çын ĕçе тухман. Вĕсем кашнийех 4 уйăхшăн укçа илнĕ. Çакнашкал хăтлавакансене хирĕç татăклăн кĕрешмеле.

Прогульщиксемпе летунсем производствă ĕçне, пĕтĕм коллектив ĕçне чăрмантараççĕ. Çавăнпа вĕсене хирĕç пĕтĕм коллективăн кĕрешмеле. Анчах, калас пулать, ĕçе дезорганизацилекенсене хирĕç кĕрешессине администрацийĕ меслетсемпе кăна туса пыни çителĕксĕр. Ĕç дисциплинине çирĕппĕн тытса пымала тумашкăн политикăлла-массăлă ĕçе вăйлатни кирлĕ. Ĕçри лайăх опытсене анлăн сарса пырса пĕтĕм коллектива воспитани памала.

Лайăх ĕçлекенсемпе дезорганизатăрсем хушшинче уйрăмлăх пултăр

А. В. ГОРБУНОВĂ
Çĕвĕç-маçтăр

Летунсемпе прогульщиксем пире пысăк чăрмав кÿреççĕ. Вĕсем производствă планне тултарассине кайала туртаççĕ. Анчах ку таранччен пирĕн ертелте вĕсене хирĕç тивĕçлĕ кĕрешÿ пулман. Унтан та ытларах, вĕсене ачашласа усранă. Маçтăр Лебедĕв пĕр уйăх хушшинче пĕтĕмпе те 2 коçтюм çеç çĕленĕ. Çапах та вăл лайăх хисепре. Çавăн пекех Çеребрйаков маçтăр ĕçе пĕр хутчен кăна мар ĕнтĕ ÿсĕр килнĕ. Вăл та лайăх ĕçлекенсемпе пĕр хисепре тăрать. Отпуск тата тĕрлĕрен пулăшу илес пулсан ыттисемпе пĕртан усă курать. Кунашкал пулни ертел руководителĕсем ĕç дисциплинине çирĕплетес тĕлĕшпе ĕçлеменнинчен килет.

ССР Союз Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ĕçлев кĕнекисем парасси çинчен йышăнни прогульщиксемпе летунсене хирĕç кĕрешмелли орудин пулать. Вăл постановленине епĕр ырлатпăр. Ĕç дисциплинине çирĕплетме чи малтанах лайăх ĕçлекенсемпе прогульщиксем, летунсем хушшинче уйрăмлăх тумала. Лайăх ĕçлекенсем çеç государствă паракан пулăшусемпе усă курма тивĕçлĕ.

Ĕç дисциплинине çирĕплетер

Пирĕн савăтра дисциплинă япăх. Час-часах хăшпĕр рабочисем ĕçе тухмаççĕ, йĕ кая юлса тухаççĕ. Ун пек чухне вара вăл ĕçлекен участкăра ĕç пурнăçа кĕмесĕрех юлать. Акă подручнăй пулса ĕçлекен рабочи Никитă Григорйĕв сахал мар прогул тунă, декабĕрĕн 16—17-мĕшĕсенче пĕр сăлтавсăрах икĕ кун ĕçе тухмарĕ. Çапла пулин те Григорйĕв пайан кун та производствăрах ĕçлет. Çавăн пекех Дарйă Григорйĕвă та ĕçе кая юлса тухать, декабĕрĕн 16-мĕшĕнче пачах тухман.

Саватăн ытти цехĕсемпе отделенийĕсенче те прогул тăвакансем пур, охранниксем те ĕçе тăтăшах кая юлса тухаççĕ.

Çакăн пек прогульщиксем, дезорганизатăрсем вальли производствăра вырăн пулмала мар.

А. Краснов.
Шупашкарти çăкăр савăт директорĕн помошникĕ.

М. Кузьмин.
Хуçалăх пайĕн пуçлăхĕ.

Ĕç çине çиелтен пăхаççĕ

Вăрмарти спорт инвентарсем тăвакан хапрăкра кăçал виçĕ уйăх хушши ремонт пычĕ. Анчах хапрăк дирекцийĕ çак ĕç çине çиелтен пăхнă пирки, ремонт ăнăçулă пулаймарĕ. Тĕплĕн пăхсан хапрăка халĕ тепĕр хут ремонт тумала. Акă, явăç çуракан рамăсенех илер. Вĕсем пысăк пĕренесене çураймаççĕ, çĕмĕрĕлсе кайаççĕ, вĕсен пайĕсем çителĕклĕ мар. Çавна пула рабочисен час-часах простойсем пулаççĕ. Пăспа ĕçлекен машинă та аран-аран ĕçлет, унăн запаслă пайĕсем çук.

Тивĕçлĕ организацисен пирĕн хапрăк ĕçĕпе интересленес пулать.

Рабочи.

Чăваш АСС Республикĕнчи йалти вырăнсенче 1939 çулта пурăнмали çуртйĕр тата кулътурăпа йăла строителстви валлли укçа-тенкĕ пухассине туса иртерессии çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă постановлени

ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1934 çулти йанварĕн 23-мĕшĕнче тата 1935 çулти йанварĕн 14-мĕшĕнче „Хуласенче тата йалти вырăнсенче пурăнмали çуртйĕр тата кулътурăпа йăла строителстви валлли укçа-тенкĕ пухасси çинчен“ (ССРС Саккунĕсен сборникĕ № 5 1934 ç., 38 статйа; № 4—35 ç., 31 статйа), 1936 çулти йанварĕн 5-мĕшĕнче „Налог законодателствине улăштарасси çинчен“ (ССРС з. с. № 2—36 ç., 18 статйа), 1937 çулти мартăн 14-мĕшĕнче „ССРС Тĕпĕçтăвкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1934 çулти йанварĕн 23-мĕшĕнче „Хуласенче тата йалти вырăнсенче пурăнмали çуртйĕр тата кулътурăпа йăла строителстви валлли укçа-тенкĕ пухасси çинчен“ йышăннă постановленин 18-мĕш статйине тата „Уйрăм çынсенчен тупăш налогне илмели положенин“ 5-мĕш статйине улăштарасси çинчен йышăннă постановленисем (ССРС з. с. 19 №—37 ç., 72 статйа) тата РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн 1936 çулти йанварĕн 13-мĕшĕнчи 12-ш №-лĕ тата 1938 çулти йанварĕн 23-мĕшĕнчи 14-мĕш №-лĕ „Йалти вырăнсенче пурăнмали çуртйĕр тата кулътурăпа йăла строителстви валлли укçа-тенкĕ пухассине туса иртерессии çинчен“ йышăннă постановленисем тăрăх,

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнат:

1. Районсем тăрăх колхозниксемпе ĕççынни йединоличниксен хуçалăхĕсенчен пухмали кулътсбор укçин виçине çапла тăвас:

РАЙОНСЕМ	Колхозниксен пĕр хуçалăхĕнчен тенкĕпе: Пĕрлешӳмен тупăшсем çук пулсан	Колхозниксен пĕр хуçалăхĕнчен тенкĕпе: Пĕрлешӳмен тупăшсем пур пулсан	Йединоличник хуçалăхĕсенчен иртнĕ çулти йалхуçалăх налогĕн çакăн чухлĕ проценчĕ: [illegible] çук пулсан	Йединоличник хуçалăхĕсенчен иртнĕ çулти йалхуçалăх налогĕн çакăн чухлĕ проценчĕ: [illegible] тупăш пур пулсан
Улатăр	7	27	95	140
Елĕк	7	27	95	130
Патăрйел	7	24	95	120
Вăрнар	7	30	95	140
Йĕпреç	7	27	95	140
Ишлей	7	27	95	120
Канаш	7	27	95	140
Куславкка	7	24	95	120
Хĕрлĕ Чутай	7	30	95	130
Кувакинă	7	27	95	130
Сĕнтĕрвăрри	7	27	95	120
Пăрачкав	7	30	95	130
Турхан	7	24	95	140
Тутаркас	7	30	95	130
Трак	7	27	95	120
Вăрмар	7	27	95	130
Çĕрпӳ	7	27	95	120
Шупашкар	7	27	95	130
Шăмăршă	7	24	95	120
Шăхасан	7	27	95	130
Шăнкăртам	7	24	95	130
Çĕмĕрле	7	27	95	140
Етĕрне	7	30	95	140
Йелчĕк	7	24	95	120
Тăвай	7	27	95	130

2. Çак постановленин 1-мĕш статйинче тунă ставкăсене пăхăнса, районсенчи ĕçтăвакан комитетсем уйрăм йалсем валлли, кирлĕ пулсан, уйрăм колхозсем валлли те татăклă ставкăсем туса параççĕ, вĕсене ССРС Тĕпĕçтăвкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1935 çулти йанварĕн 14-мĕшĕнче йышăннă постановленин 2-мĕшпе 4-мĕш статйисенче кăтартнă ставкăсенчен иртсе йе чакарса тумалла мар. Вăл ставкăсем пĕр йалти йе колхозри пур хуçалăхсем валлли те пĕр пек пулмала.

3. Йединоличник хуçалăхĕсенчен пухакан кулътсбор оклачĕ, лъготăсем парасчен, çав вырăнти пĕрлешӳмен тупăшсем илекен колхозниксем валлли тунă ставкăран 25 процентран кайа мар пысăкрах пулмала.

4. Йалхуçалăх налогĕ çинчен кăларнă Положенин 95-мĕш статйин тăрăх йалхуçалăх налогĕ хунă йединоличник хресчен хуçалăхĕсен, кулътсбор укçи иртнĕ çулхи йалхуçалăх налогĕ çумне 200 процент хушнă чухлĕ хисеппе тӳлемеле, вĕсем кулътсбор укçи тӳлессинче нимĕнле лъготăпа та уса курмаççĕ.

5. Ĕççынни йединоличниксен хуçалăхĕсем, вĕсем кулътсбор укçи тӳлессин пĕррремĕш срукĕччен колхоза кĕнĕ пулсан, колхозниксен хуçалăхĕсемпе пĕр пек хисеппех тӳлеççĕ.

Колхозран тухнă хуçалăхсем кулътсбор укçине йединоличник хуçалăхĕсем пекех, çав укçа-тенке илессине туса ирттернĕ чухне пулнă хайсен тупăшĕсем тăрăх, тӳлеççĕ.

6. Кулътсбор укçи хумасçĕ: рабочисемпе служащисен—колхоз членĕсен хуçалăхĕсем çине, вĕсен тĕп работникĕ çак çулти йанварĕн 1-мĕш тĕлне йалавах кĕрĕшсе пĕр çултан кайа мар ĕçленĕ пулсан, çавăн пекех тата хуçалăхăн ытти ĕçлеме пултаракан членĕсем те, вĕренекенсемпе килти ĕçе туса пыракансемсĕр пуçне, кĕрĕшсе ĕçлеççĕ пулсан, йалхуçалăхĕнчи хушма тупăшсенчен кулътсбор укçи тӳлемеççĕ.

Колхозсенче тăман рабочисемпе служащисен хуçалăхĕсем те хуçалăх членĕсем çӳлте асăннă условисене тивĕçлĕ пулсан тата хушма йалхуçалăхĕ çав районри колхозниксем валлли йалхуçалăх ертелĕн уставĕ тăрăх ирĕк панă хисепрен иртсе каймаст пулсан, çавăн пек хушма йалхуçалăх тупăшĕнчен кулътсбор укçи тӳлемеççĕ. Йалхуçалăх налогĕ пухакан вырăнсенче, çавăн пек хуçалăхри тĕп работник йалавах кĕрĕшсе пĕр çултан кайа ĕçлет пулсан, вăл хуçалăха кулътсбор укçи п ĕ р л е ш ӳ м е н тупăш илекен хуçалăхсем валлли тунă ставкăпа тӳлеттереççĕ.

АСĂРХАТТАРНИ: 1) Çак постановленин 6-мĕш пунктĕнче рабочисемпе служащисем валлли тунă лъготăсем пенçионерсен—вăрçă, ĕç инвалидĕсен, çемйере кам та пулсан вилнĕ пирки пенçи илсе тăракансен тата персоналлъăй пенçи илекенсен хуçалăхĕсене те тивет.

2) Çак лъгота тĕп работник пулнă çын халь Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс Çар Флочĕн службинче тăракансен хуçалăхĕсене те, вăл работник Хĕрлĕ Çара йе Тинĕс Çар Флот службине кайиччен кĕрĕшсе ĕçлемен пулсан та, тивет.

Çак постановленин 6-мĕш пункчĕнчи лъгота условисене пăхăнасси тата çак асăрхаттарăвăн 1-мĕшпе 2-мĕш пункчĕсенче кăтартнă хуçалăхсемшĕн облазателлă пулса тăрат.

7. Йалти вырăнсенче промысла коопераци ертел членĕсен хуçалăхĕсем кулътсбор укçи пĕрлешӳмен тупăш илекен колхозниксен хуçалăхĕсемпе пĕр пекех тӳлеççĕ, анчах çакăн пек пулсан:

а) промысла коопераци ертелĕн çав членĕн колхоз уставĕ тăрăх пĕрлештерме тивĕçлĕ йалхуçалăхĕ çук пулсан;

б) çав вăхăтрах вăл хуçалăхăн ĕçлеме пултаракан пур членĕсем те, килхуçи хĕрарăмĕсĕр тата вĕренекенсемсĕр пуçне, промысла ертел йе колхоз членĕнче тăраççĕ, йе тата кĕрĕшсе ĕçлеççĕ пулсан.

Колхозниксен хуçалăхĕсене памали лъготăсем

8. Кулътсбор укçи тӳлессинчен пĕтĕмпех хăтараççĕ:

а) колхозниксен хуçалăхĕсене, вĕсен хуçалăхĕнче Совет Сойузĕн Геройĕсем, ССР Сойузĕн орденĕсемпе йе револъуцилĕ хисеплĕ хĕçпăшалпа наградăланă çынсем тата ĕç геройĕсем, инвалидăçăн 1-мĕш тата 2-мĕш группине кĕртнĕ ĕçпе вăрçă инвалидĕсем, колхоз ĕçĕнче суранланнă инвалидсем пулсан;

б) çул иртсе ватăлнипе ĕçлеме пултарайман (60 çулхисемпе унтан иртнисем) колхозниксен йуçалăхĕсене, çав хуçалăхри çемйере, ĕçлеме пултаракан членсем çук пулсан.

АСĂРХАТТАРНИ: Ватăлнипе ĕçлеме пултарайман тесе 1939 çулта колхозниксен хуçалăхĕсене йалти кулътсбор укçине тӳлессинче лъготăсем панă чухне çул тĕлĕшĕпе çаксене шутлаççĕ: арçынсене 1879 çулта тата маларах çулсенче çуралнисене, хĕрарăмсене 1884 çулта тата маларах çулсенче çуралнисене, ачасене 1923 çулта тата кайарахпа çуралнисене;

в) план тăрăх урăх çĕре пурăнма куçнă, çавăн пирки иртнĕ çулта йалхуçалăх налогĕ тӳлессинчен хăтарнă хуçалăхсене, çавăн пекех тата йалхуçалăх налогĕ хурассине туса иртернĕ хыççăн план тăрăх урăх çĕре пурăнма куçнă тата ССРС Тĕпĕçтăвкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1937 çулти нойаберĕн 17-мĕшĕнче „Йалхуçалăхĕнче пурăнма çĕнĕ çĕре куçакансене памали лъготăсем çинчен“ йышăннă 115/2043-мĕш № постановлени тăрăх лъготăпа усă куракан хуçалăхсене.

9. Районри финанс пайĕсем, районри ĕçтăвакан комитетсен президиумĕсем йышăннă тăрăх, колхозниксен хуçалăхĕсене кулътсбор укçи тӳлессинчен пĕтĕмĕшпех йе пĕр пайне хăтарма пултараççĕ (сăмахран, ĕнкек-синкекрен сийен курнисене т. ыт.).

10. Хуçалăхра икĕ членттан ытла ĕçлеме пултарайманнисем пулсан, ун пек колхозник хуçалăхĕсен кулътсбор укçи тӳлес хисеп чакат: ĕçлеме пултарайманнисем виççĕ пулсан—20 процент, тăватă пулсан—30 процент, пиллĕк йе ытларах пулсан—40 процент.

11. Скидка илме хуçалăха права памала тунă чухне ĕçлеме пултарайманнисем тесе çаксем шутланаççĕ:

а) 60 тата ытларах çула çитнĕ арçынсем, 55 тата ытларах çула çитнĕ хĕрарăмсем, 16 çула çитмен ачасем;

б) уйхир тата ытти ĕççене хутшăнма пултарайман ухсах-чăлахсене;

в) социаллă пулăшу йе социаллă страховани органĕсем инвалидăçăн 1-мĕшпе 2-мĕш группине кĕртнĕ ĕçпе вăрçă инвалидĕсем тата колхоз ĕçĕнче суранланса ĕçлейми пулнă инвалидсем.

Йединоличник хуçалăхĕсене памали лъготăсем

12. Кулътсбор укçи тӳлессинчен пĕтĕмĕшпех хăтараççĕ:

а) çул иртсе ватăлнипе (60 çултисемпе унтан иртнисем) ĕçлеме пултарайман йединоличник хуçалăхĕсене—çав хуçалăхри çемйен ĕçлеме пултаракан членсем çук пулсан.

АСĂРХАТТАРНИ: Ватăлнипе ĕçлеме пултарайманнисем тесе 1939 çулта йалти кулътсбор укçи тӳлессинче йединоличник хуçалăхĕсене лъготă панă чухне çул тĕлĕшĕпе çаксене шутлаççĕ: арçынсене 1879 çулта тата маларах çулсенче çуралнисене, хĕрарăмсене 1884 çулта тата маларах çулсенче çуралнисене, ачасене 1923 çулта тата кайарах çуралнисене;

б) план тăрăх урăх çĕре пурăнма кусна, çавăн пирки иртнĕ çул йалхуçалăх налогĕ тӳлессинчен хăтарнă хуçалăхсене, çавăн пекех тата 1937 çулти йалхуçалăх налогне пухассине туса ирттернĕ хыççăн план тăрăх урăх çĕре пурăнма куçнă тата ССР Сойузĕн Тĕпĕçтăвкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕн 1937 çулти нойаберĕн 17-мĕшĕнче йышăннă 115/2043-мĕш номерлĕ постановленийĕ тăрăх лъготăпа усă куракан хуçалăхсене.

13. Ĕççынни йединоличниксен хуçалăхĕсем, вĕсен хуçалăхĕнче Совет Сойузĕн Геройĕсем, ССР Сойузĕн орденĕсемпе йе револъуцилĕ хисеплĕ хĕçпăшалсемпе наградăланă çынсем тата ĕç геройĕсем, çавăн пекех инвалидăçăн 1-мĕшпе II-мĕш группине кĕртнĕ ĕçпе вăрçă инвалидĕсем пур пулсан, кулътсбор укçинчен—20 процент чухлĕ скидкăпа усă кураççĕ.

14. Районри финанс пайĕсем, районри ĕçтăвакан комитетсен президиумĕсем йышăннă тăрăх, ĕççынни йединоличниксен уйрăм хуçалăхĕсене кулътсбор укçи тӳлессинчен пĕтĕмĕшпех йе пĕр пайне хăтарма пултараççĕ (сăмахран, инкек-синкекрен сийен курнисене т. ыт.).

Кулътсбор укçи тӳлемели сруксем

15. Колхозниксемпе йединоличниксен хуçалăхĕсен кулътсбор укçине икĕ срукра тӳлемеле: 50 процентне февралĕн 15-мĕш тĕлне, 50 процентне мартăн 15-мĕш тĕлне. Йалхуçалăх налогĕ çинчен кăларнă Положенин 95 мĕш статйи тăрăх йалхуçалăх налогĕ çумне 200 процент хушнă чухлĕ тӳлемели хуçалăхсем кулътсбора пĕр срукра—февралĕн 15-мĕш тĕлне тӳлесе татмала.

16 Районсенчи ĕçтăвакан комитетсене хуçалăхсене пĕтĕмĕшпех тата тĕрĕс шута илессине, кулътсбор укçи хисепне вăхăтра тата тĕрĕс шутласа хурассине тата саккунпа тунă мĕнпур лъготăсене парассине пурнăçа кĕртме хушас.

17. Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулти февралĕн 7-мĕшĕнче „Хуласемпе йалти вырăнсенче пурăнмали çуртйĕр тата кулътурăпа йăла строителстви валлли укçа-тенкĕ пухассине туса иртерессии çинчен“ йышăннă постановленине хăйĕн вăйне çухатнă тесе шутлас.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ А. Сомăв.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕçĕсене пăхаканĕшĕн М. Алексейĕв.

Шупашкар хули.
1938 çулти декабĕрĕн 20-мĕш.

Халăх переписçĕ умĕн

ТĂВАЙ. Декабĕр уйăхĕнче пулас переписре ĕçлекенсене вĕрентрĕç. Инструктăр-контролърсене, счетчиксене вĕрентсе кăларнă. Халĕ счетчиксем тепĕр ушкăнне вĕрентеççĕ.

Ал. Пикишкин.

КӲКЕÇ. Шупашкар районĕн центрĕнчи кулътурă çуртĕнче Пĕтĕм Сойузри халăх переписĕ йачĕпе выставкă организацилерĕç. Выставкăра ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ перепис çинчен йышăннă постановлени, хаçатсенче пичетленсе тухнă статйасем, перепис иртнĕ чухне çырмали бланкăсем, кĕнекесем, лозунгсем тата ыттисем те пур.

П. Никифăрăв.

ВĂРМАР. Аслă Чак йалсоветĕнче агитатăрсен ушкăнĕ 21 çынран тăрат. Вĕсен шутĕнче çичĕ учител.

Агитатăрсене уйрăм участкăсем, урамсем çирĕплетсе панă. Учителагитатăрсем пулас халăх переписĕ çинчен тата ăна мĕнле иртермели çинчен халăха ăнлантарса параççĕ. Переписе хатĕрленнĕ май колхозниксен пухăвĕсенче докладсемпе калаçусем тăхăр хут иртнĕ.

В. Андрийанăв.

ИШЛЕЙ. Ишекри иккĕмĕш перепис уйрăмне кунă йалсовечĕ, 42 йал кĕрет. Ку йалсенче счетчиксем 27 çын ĕçлемеле. Счетчиксене кĕске курссем урлă ушкăнăн-ушкăнăн вĕрентсе кăлараççĕ.

Счетчиксемпе инструктăр-контролърсен шутĕнче йалсовет председателĕсемпе секретарĕсем тата учителсем ытларах.

Перепис çинчен ăнлантарасси сарăлсах пырат. Иккĕмĕш перепис уйрăмĕнче докладсемпе калаçусем нумай иртернĕ.

Арк. Наумăв.

ÇĔМĔРЛЕ. Йуманай йалсоветне кĕрекен шкулсенчи учителсем колхозниксемпе йединоличниксене 1939 çулта пулакан халăх переписĕ çинчен ăнлантарса параççĕ.

Кабацк йалĕнче учителницă П. Е. Сергейевă йулташ колхозниксен пухăвĕнче виçĕ хутчен доклад туса панă. Вăл халĕ хутла сахал пĕлекен ачала хĕрарăмсене килĕсене çӳресе хутла вĕрентет. Килĕсенче те перепис çинчен ăнлантарса параççĕ.

Г. Давыдăв.

ТĂВАЙ. Тĕмер йалĕнче агитатăрсен коллективĕ ĕçлет. Агитатăрсем бригадăсенчи колхозниксен пухăвĕсенче перепис çинчен докладсем туса панă. Бригадăсенче ку ыйту тăрăх йатарласах стена хаçачĕсем кăларнă.

Колхоз клубĕнче перепис кĕтесĕ организациленĕ. Унта перепис çинчен материалсем тата çĕршывăн ӳсĕмĕсене кăтартакан диаграммăсем пур.

Белъайĕв.

ШАХАСАН. Вăрман Йенĕш йалсовет председателĕ И. Петров йулташ переписе хатĕрленес тĕлĕшпе активлăн ĕçлет.

Ăнлантару ĕçĕсене туса пыма йалсоветĕпе агитаци участкисем 18 тунă. Вăл участкăсенче ăнлантару ĕçне комсомолецсемпе йалсовет членĕсем туса пыраççĕ. Вунă кунта пĕрре агитатăрсемпе семинар туса иртереççĕ.

И. Д. Смирнов.

Уйава хатĕрленетпĕр

Хĕрлĕ Çар ретне килнĕренпе виçĕ уйăх иртрĕ ĕнтĕ. Вăхăта ĕçлĕхлĕ те савăнăçлă иртеретпĕр. Час-часах чăваш хорĕ тĕрлĕ йурăсем йурласа парат. Красноармейец Орлов йулташ чăваш йуррисене питех те пултарулăн йурласа пачĕ, халĕ ăна Ташкентри олимпиадăна йамала турĕç.

Епĕр килсенех полк шкулне вĕренме кĕрсешĕнччĕ. Ĕмĕт пурнăçа кĕчĕ. Халĕ шкулта вĕренетпĕр.

Çамрăк курсантсем вĕренӳ пуçлансанах хăйсен пултарулăхне кăтартма тытăнчĕç. Çар ĕçĕн техникине ăнăçлă вĕренсе пыраççĕ. Пирĕн хушăра пултарулла агитатăрсем ӳсеççĕ. Сăмахран, курсант Филиппăв йулташ пушă вăхăтсенче курсантсемпе калаçусем туса иртерет.

Епĕр Хĕрлĕ Çар тата Тинĕс-Çар Флочĕ 21 çул тултарнине çитĕнӳсемпе кĕтсе илме пултăмăр. Çар ĕçне тата политикăна лайăх вĕренсе пырассишĕн социалисăмла ăмăрту пуçарса йатăмăр.

Курсант Н. Михайлăв.

Агротехникăлă ĕççене анлăн пурнăçа кĕртессишĕн

Районри колхоз выставкинчен

Куславккара декабĕрĕн 12-мĕшĕнче колхозсен районри выставки пулса иртрĕ. Ку выставкă кăçал колхозсем вăйлă тырпулшăн мĕнле кĕрешнине тата çак кĕрешӳ ăнăçлă пулнине уççăн кăтартса парат.

Епĕр кунта выставкăна хутшăннă колхозсен паха опычĕсем çинче чарăнса тăрасшăн. Шăнчас колхозĕ мулъчированни тунă лаптăк çинче гектартан 15,5 центнер, ахалъ вырăнта 9,5 центнер сĕлĕ туса илнĕ. Пер гектар çинче 12 тоннă тислĕкпе мулъчировани тунă 34,5 центнер тухăç панă. Çапла ĕнтĕ мулъчировани тырпул тухăçлăхне вăйлăн ӳстернине кураткăр. Çак колхозрах кĕрхи çĕртме айне гектар пуçне 9 центнер фосфорит çăнăхĕ. 12 тоннă сурăх тислĕкĕ тăкса хăварнă участкăра гектартан хĕрĕх сакăр центнер урпа туса илнĕ. Тырпул тухăçлăхĕ тырра хăш вăхăтра акнинчен те килет. Ăна çак опыт лайăх кăтартса пама пултарат. Апрелĕн 19-мĕшĕнче акнă сĕлĕ тухăçлăхĕ 12 центнер патне, апрелĕн 26-мĕшĕнче акни 9 центнер пулнă.

Кунер колхозĕнче калчасене апат паман участкăра гектартан 13 центнер ытларах ыраш туса илнĕ пулсан, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕпе апат панă участкăра—20 центнер пуçтарса илнĕ. Çавнашкалах тата Катĕркасси колхозĕнче тулăна тислĕк шĕвĕкĕпе апат парсан, тулă тухăçлăхĕ 20 центнер патне, ахалъ вырăнта тухăç 11 центнер ытларах кăна пулнă.

Выставкăра Аманик колхозĕ вăйлă тырпул туса илнипе уйрăмах палăрса тăрат. Ку колхоз кăçал агротехникă кăтартăвĕсене тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пынипе вăтам шутпа кашни гектартан 15 центнер патне тĕштырă туса илнĕ. Çавăн пекех çитес çулхи вăйлă тырпулшăн тăрăшса ĕçлет, 203 гектар çине 5.768 лав торф, пĕр пин лав ытларах тислĕк кăларса кĕрхи çĕртме сухи туса хăварнă. Халъ колхозра 62 гектар çинче йур тытма хатĕрленӳлĕ ĕççем туса иртернĕ.

Агротехникăла ĕççене анлăн пурнăçа кĕртни кăçал вăйлă тырпул туса илме май пачĕ. Ку ĕççене колхозсен çитес çулта тата анлăрах пурнăçа кĕртес пулат.

Н. Мранъка.

Кадрсене ĕçре пулăшса, вĕрентсе пымала

Пирĕн хăшпĕр уйрăм колхозсенче кадрсене ĕçе уйарса лартнă хыççăн, вĕсене ĕçре пулăшса, вĕрентсе пымаççĕ. Çĕнĕ çын хăйне шанса панă ĕçе тӳрлетес, лайăхлатас тĕлĕшпе тĕрлĕрен ыйтусем кăларса тăратат, колхоз правленийĕчен йе районри организацисенчен пулăшу пама ыйтат. Анчах, унăн ыйтăвĕ çине нихăшĕ те кирлĕ пек çавăрăнса пăхмаççĕ. Çавна пулах ĕнтĕ Хĕрлĕ Чутай районĕнчи „Мотор“ колхозра пĕр çул хушшинче 3 председател, 2 бригадир, фермăра ĕçлекенсемпе конюхсем 32 çын улшăннă. Çынсем улшăнса тăнипе колхозри тата фермăри ĕççем йапăхса кайнă. Сĕт-çу ферминчи ĕнесем начар. Вылăх апачĕсене тирпейлĕ, перекетлĕ тыткаламаççĕ.

Енгелс тата Чапайĕв йачĕсемпе тăракан колхозсенче те çавнашкалах, çынсене ĕçе тĕплĕн хăнахса çитмесĕрех улăштараççĕ. Енгелс йачĕпе тăракан колхозра пĕр çул хушшинче фермăра ĕçлекенсем 24 çын таран улшăннă.

Малашне кадрсемпе вылъани пулмала мар. Кадрсене ĕçре йалавах пулăшса, вĕрентсе пымала. Ку тĕлĕшпе райçĕрçĕ пайĕсен çине тăрса ĕçлес пулат.

С. Майорăв.
Вет. фелъдшер.

Вăйлă тухăçлă сӳс-кантăршăн

Йермошкăри (Вăрнар р.) Калинин йачĕпе тăракан колхозра сӳс-кантăр акса тума йатарласа уйарнă бригадă ĕçлет. Çак бригадă кăçал кашни гектартан тылларан кантăр—45.5 центнер туса илчĕ. Çу вăхăтĕнче, çавнашкалах, кантăра акса хăварнă вăхăтра агротехникă кăтартăвĕсене çирĕп пăхăнса ĕçленĕ. Колхоз государствăна сӳс-кантăр парса татнă хыççăн, йулашкине ĕçкунĕсем тăрăх колхозниксене валеççĕ панă.

Сӳс-кантăр бригади çитес çулта тата вăйларах тухăçлă сӳс-кантăр туса илессишĕн кĕрешет. Кăçал кĕркунне çитес çулта кантăр акса хăвармали лаптăк çине йушкăн тата тислĕк çителĕклĕ кăларнă, вăрлăхсем те çителĕклĕ хатĕрленĕ.

Бригадăра колхозниксемпе колхозницăсем халь сӳс-кантăр ĕçĕн агротехникă кăтартăвĕсене вĕренеççĕ.

А. Владимиров.

Паха опытсем

Вăтакас Татмăшри (Канаш р.) „Париж Коммунĕ“ колхозра В Гурйĕв йулташ чылай çулсем хушши тĕрлĕрен опытсем туса иртерет, колхозниксене вăйлă тырпул туса илме вĕрентсе пырат. Вăл районра паллă опытник пулса тăчĕ. Унăн опычĕсемпе районри чылай колхозсенче усă кураççĕ.

Кăçал çуркунне Гурйĕв çакнашкал ĕç туса пăхнă. Пысăк катка илсе, çуррине йалăн шыв тултарнă. Шыв çине 1 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 120 килограм фосфорит çăнăхĕ, 1 центнер лаша тислĕкĕ, 70 килограм фекали йарса хутăштарнă. Çакна 11 кун хушши йӳçтернĕ. Кун хыççăн кашни 3 литр пуçне пĕрер витре шыв хутăштарнă. Çак шĕвекпе сĕлĕ вăрлăхне биоактиваци туса 22 гектар çинче акса хăварнă. Кашни гектартан 26-шар центнер сĕлĕ пуçтарса илнĕ.

Иртнĕ кĕркунне Гурйĕв опытник 1,2 гектар ыраш калчи çине тислĕк сапса ăшă тăмала туса хăварнă. Ăна вăл çапла туса иртернĕ. 16 тоннă таран тислĕкпе тапра хатĕрлесе хутăштарнă хыççăн, ăна калчасем çине 2—3 сантиметр хулăмĕш сарса тухнă. Çапла вара, кăçал çав лаптăк çинчен 280 пăт ыраш пуçтарса илнĕ.

Ст. Филиппăв.

КĔСКЕН

** Отличниксене—канмали çурта. Улатăрти транспарт комбинатĕнче отличнă паллăпа вĕреннĕ 10 ачана канмали çуртсене йанă. Кунсăр пуçне отличнă вĕренекенсене 40 ачана укçа парса премиленĕ.

** Пулемета вĕренеççĕ. Шупашкарти комунала-строителънай техникум çумĕнчи Осоавиахим организацийĕ пулемета вĕренмели кружок организациленĕ. 14 студент ручной пулемета, 27 студент станоклă пулемета вĕренеççĕ.

** Оборонă значокĕсем илеççĕ. Шупашкарти акушеркăсен шкулĕнче II—III мĕш курссенче вĕренекенсем пĕр çын йулмийех ПВХО значокĕн I-мĕш сыпăк нормине панă.

Чăваш АСС Республикĕнче 4-мĕш кварталта укçа-тенкĕ пухас плана мĕнле тултарса пынине кăтартни


(Декабĕрĕн 21-мĕшне, процентпа)

РАЙОНСЕМ	Плана тултарнă
Улатăр	62,8
Елĕк	61,6
Патăрйел	47,8
Вăрнар	68,7
Йĕпреç	40,8
Ишлей	60,8
Канаш	51,4
Куславкка	61,7
Хĕрлĕ Чутай	59,4
Кувакинă	67,3
Сĕнтĕрвăрри	55,0
Пăрачкав	54,8
Турхан	52,5
Тутаркас	61,7
Трак	59,6
Вăрмар	44,3
Çĕрпӳ	61,0
Шупашкар	65,0
Шăмăршă	58,3
Шăхасан	58,5
Шăнкăртам	76,6
Çĕмĕрле	46,6
Етĕрне	61,0
Йелчĕк	57,9
Тăвай	59,1
Улатăр хули	69,9
Канаш хули	71,9
Шупашкар хули	87,8
Республикĕпе	58,6

Курсран вĕренсе тухнă

Чăвашпотребсойуз Шупашкарта бухгалтерсен, плановиксен, йалпо председателĕсен курсĕсене организациленĕ. Декабĕрĕн 17-мĕшĕнче плановиксен курсĕнчен 17 çын вĕренсе тухса райсойузсене ĕçлеме саланчĕç.

А. Вазанăв.



Тираспăльре — Молдаван АССР столици — художествăлă харпăрхăй пултарулăх олимпиади пулса иртнĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: В. М. Калерманпа Л. П. Саковскайă олимпиадăра молдавăнсен ташшине ташлаççĕ.

С. Гальперин фото-ӳкерчĕкĕ. (Бюро-клише ТАСС).

Йугослави правительстви отставка тухнă

Йугослави правительстви принц регент Павла отставкă çинчен зайавлени панă. Çĕнĕ кабинет тума Стойадиновича хушнă, вăл çĕнĕ правительствăра та йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулса йулат. Çĕнĕ правительствăна: Корошец (вăл виçĕ çул çурă хушши шалти ĕçсен министрĕ тата министрсен совечĕн преçседателĕн заместителĕ пулнă), профессăр Магарасевич (çутĕç министрĕ), Цирич (почтăпа телеграф министрĕ) тата портфельсĕр министрсем—Новаковичпа Годжера кĕмеççĕ.

Иугослави правительстви отставка тухасси, Стойадинович государствăн тĕпри аппаратĕн рольне çĕршывăн пур пайĕсенче те, уйрăмăн—правительствăна хирĕç оппозици вăйланнă Хорватире—вăйлатма шутланăран пулнă, теççĕ. Çĕнĕ правительствă пур оппозицилĕ партисене те „çирĕп алпа“ тыткалакан правительствă пулат, теççĕ.

(ТАСС).

Англири учитĕл çырăвĕ

Англи компарти хаçачĕ „Дейли Уоркер“ пĕр учитĕл çырăвне пичетлесе кăларнă. Çак çырура Англи учителĕ Англи шкулĕсенче вĕренекен ачасен йăвăр пурнăçĕ çинчен каласа парат.

„Пирĕн шкулта 100 ача вĕренет, —тет вăл. —Анчах ачасем шкула питĕ начар çӳреççĕ, уйрăмăнах— çанталăк начар чухне, мĕншĕн тесен, ачасенчен нумайĕшĕн урана тăхăвма нимĕн те çук. Шкула йĕркелĕ çӳрекен ачасен те, нумайĕшĕн, тумтирĕсем начар, хăйсем хăйусăр, кичем, мĕншĕн тесен маргарин кăна сĕрсе çинĕ çăкăр нумайах вăй параймаст.

Вĕренекен ачасенчен ытларахăшĕ апат начар çинĕ пирки ытла та сăнсăр. Çапах та пире ачасене лайăх вĕрентме хушаççĕ. Анчах епĕр выçă тата чирлĕ ачасене вĕрентме пултăраймастпăр. Англи шкулĕсене инспектăрсенчен ытларах врачсем кирлĕ“.

(ТАСС).

Николайĕв хуливчи (УССР) „Червона Заря“ савăт литейщикĕн Дворницкий йулташăн çемйе членĕсем пурте струвăлă инструментсем çинче выльăма тата ташлама ăста.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: В. И. Дворницкий хăйĕн çемйипе.

Й. Аврутин фото-ӳкерчĕкĕ. (Бюро-клише ТАСС).

Китайри вăрçă

(Чунцинран, Шанхайран тата Лондăнран ТАСС корреспонденчĕсем пĕлтернĕ тăрăх)

Центр Китайра

Центр Китайри фронтсенче палла улшăнусемех пулман. Иочжоу районĕнче (Уханьрен кăнтăр йеннерех) пулнă çапăçусенче йулашки икĕ ерне хушшинче йапонĕцсен икĕ пин çын вилнĕ тата аманнă, вăл шутра аслă офицерсем те пулнă.

Кăнтăр Китайра

Кантонран кăнтăрарах Китай çарĕсем партизансемпе пĕрле контрнаступленине вăйлатса пыраççĕ. Кантон—Коулунск чукунçулĕн кăнтăр участкине пĕтĕмпех йапонĕцсенчен тасатнă. Декабĕрĕн 19-мĕшĕнче Китай çарĕсем Пинхуна йышăнса Шилун çине наступлени туса пыма тытăннă. Китай çарĕсем пĕр вăхăтрах Цзенчене те атакăлаççĕ.

Йулашки кунсенче Китай авиаци активлăхĕ палăрнă. Авиаци кăнтăр Китайра йапонĕцсен позицийĕсем çине хăйулă тапăнса пынă. Декабĕрĕн 18-мĕшĕнче Китай самольочĕсем йапонĕцсен Кантонри çар обйекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Декабĕрĕн 20-мĕшĕнче йапонĕцсен Кантон çывăхĕнчи аеродромĕ çине нумай бомбăсем пăрахнă. Çавăн пекех, китайĕцсен самольочĕсем Йапони çарĕсем пухăнса тăнă Самшу районĕ çине те атакăланă.

Çурçĕр Китайра

Хенань провинцинче Кайфынпа Синьсйан хушшинчи çĕмĕрсе тăкнă шоççе çулне йапонĕцсем васкавлăн тӳрлетеççĕ. Китай партизанĕсем час-часах тапăнса йапонĕцсене çула йĕркене кĕртес çĕрте чăрмантарса тăраççĕ.

* * *

Йапонĕцсен самольочĕсем Панхойра порт тата савăтсем çине (Гуандун провинци кăнтăр-хĕвеланăç пайĕ) тата Кантон—Ханькоу чукунçулĕн хăшпĕр пункчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Сычуань провинцинче

Китайăн халăхи столици Чунцин — Сычуань провинцинче. Ку ĕнтĕ ăнсăртран пулман. Китай халăхĕн захватчиксене хирĕç, нацилĕ ирĕклĕхшĕн пыракан вăрçин економикăлă базине тăвас ĕçре Сычуань провинци калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрат. Территори тĕлĕшĕнчен, халăх тĕлĕшĕнчен Сычуань Йапонирен чылай пысăкрах. Провинцире çутçанталăк пуйанлăхĕ калама çук пысăк.

Провинци тусем çинчи ĕлĕк кайра пулнă йалĕсенче те халăхи вăхăтра хĕрӳлĕ пурнăç вĕресе тăрат. Халăхăн мĕлйунлă массисене, çутçанталăкăн калама çук пысăк пуйанлăхĕсене хускатса йанă. Тĕрлĕрен пунктсенче çар промышлĕннăç предприйатийĕсем тăваççĕ, çĕркăмрăк, ыттăн кăларас ĕç ӳссе пырат, промышлĕннăçлă çĕнĕ центрсем шăтса тухаççĕ. Халиччен Шанхайра, Бейпинра тата Нанкинра пулнă темиçе университета Сычуане куçарнă. Унта пĕтĕм Китайран интеллигенци представителĕсем, çамрăксем пухăнаççĕ.

Пулашки 20—30 çул хушши Сычуань провинцийĕ вĕçсĕр вăрçăсен, шалти междуусобицăсен арени пулнă. Йапони войеншчинин тата унăн агентури — [illegible] пăтратса çӳренĕ. Вĕсем провокацисемпе диверçисем туса, Сычуаньре нацилĕ тĕп правительствăна хирĕç тăратма тăрăшнă. Ирĕклĕхшĕн пыракан вăрçă пуçлансан, Йапонин чейе планĕсем пĕтĕмĕшпех ишĕлсе аннă. Нацилĕ пусмăрлăх хăрушлăхĕ умĕнче пĕтĕм Китай халăхĕ çĕкленчĕ.

Вăрçă пуçлансанах Сычуань халăхĕ тăшмана хирĕç хĕрӳшал тытса кĕрешес ĕçре çĕршыва тата нацилĕ правительствăна пулăшма тытăннă. Вăрçă пуçланнă хыççăн пĕр çулталăк хушшинче Сычуань фронт валли 20 дивизи панă. Сычуаньран 600.000 салтака йахăн фронта кайнă. Вĕсенчен нумайĕшĕ Китай халăхне никама пăхăнмасăр пурăнмала тăвасишĕн паттăрăн кĕрешсе хăйсен пурнăçĕсене панă.

Кантон тата Ухань парăнтă хыççăн, Сычуаньре васкавлăн çĕнĕ çар тума тытăннă, вăл çарта сычуанĕцсем 8 мĕлйун çын. Халăхи вăхăтра провинцири 30 ытла районра салтаксене вĕрентес ĕç пырат. Темиçе пунктра авиашкулсем, çар академийĕсен 10 отделенийĕ тата тĕрлĕрен курссем ĕçлеççĕ, вĕсенче çар валли командирсен составĕ хатĕрлеççĕ.

Пайанхи Сычуанăн сăн-сăпачĕ çакăн пек ĕнтĕ.

(ТАСС).

Чжень Чен генерал зайавленийĕ

Декабĕрĕн 21-мĕшĕнче йут çĕршыв журналисĕсен конференцийĕнче Çар Совечĕн политика тытăм начальникĕ, вăлах Китай çарĕн 9-мĕш районĕн командуйушчийĕ генерал Чжень Чен доклад тунă. Вăл хăйĕн докладĕнче Китай фрончĕсенчи халăхи ĕçсем çинчен каласа кăтартнă тата вăрçă малашне мĕнле пуласси çинчен каласа панă. Чжень Чен Китайри ирĕке тухассишĕн пыракан вăрçă иккĕмĕш тапхăра кĕнине палăртнă. „Епĕр тăшман аллине чылай территорисем хăварса, хамăр вăйсене сыхласа хăвартăмăр, тенĕ вăл.—Пирĕн вăйсен виççĕмĕш пайĕ тăшман тылĕнче, виççĕмĕш пайĕ фронтсенче, виççĕмĕш пайĕ çĕршыв ăшĕнче. Çĕршыв ăшĕнче тăракан пай малтисем çине тухма хатĕр тăрат. Йапони çак вăрçа хăвăрттăн пĕтерме шутласа тунă план арканса кайрĕ.

18 уйăха пынă вăрçă пире çакна кăтартса пачĕ: Йапони Китайа парăнтарма пултарас çук. Пирĕн вăрçă нумай вăхăт хушши пымалăх условисем пур. Халăхи вăхăтра çĕршыв тылĕнче нумай çĕршер пин çĕнĕ боецсем хатĕрлес ĕç пырат. Тăшман йышăнса илнĕ территори çинче те пирĕн вăйсем кĕрешесси сарăлса пырат. Пирĕн çимĕç запасĕсем нумай, вĕсем нумай вăхăт хушши вăрçă вăрçма май параççĕ. Китай халăхĕ тăшмана таткăланах çĕнтерессишĕн çапăçма пултарасси куллен-кун ӳссе пырат. Йапони çарĕ „никам çĕнтереймен“ вăй тесе шутлани йуптару кăна. Епĕр Йапонин вăйсăр йенĕсене хыпашласа тупрăмăр. Кантона çухатни те пире салхулантармала мар. Çĕнтерӳ пурпĕрех Китай йенче пулат“.

(ТАСС).

Йапони генералĕсем хушшинчи харкашусем

ШАНХАЙ, декабĕрĕн 21-мĕш. Йапони генералĕ Доихарпа Йапони çарĕн çурçĕрти уйрăм пайĕн начальникĕ Кита хушшинче йаланах харкашусем пулса пыраççĕ. „Чайна прессе“ хаçат çапла çырат: Доихар Кита генерала, вăл „центрти Китай правительстви“ тăвас плана салатса йанă тесе айăпланă. Хаçат çирĕплетнĕ тăрăх, Доихар Йапонине економикă тата финанс йенĕпе панкрута тухса кайассинчен çăлса хăварас майпа вăрçа чарса лартасси çинчен Китай правительствипе мирлĕ калаçу пуçлани питĕ кирлĕ, тесе шутланă. Ку ыйтупа салтаксемпе кĕçĕн командный состав та Доихар майлă пулнă. Кита генерал Доихарăн мирлĕ калаçу пуçламала текен планне хытă хирĕçленĕ. Вăрçа малала тăвассишĕн тăракан çарпа тинĕс аслă командованийĕ Кита генералпа пĕр шухăшлă пулса унпа килĕшнĕ.

(ТАСС).

Испанири фронтсенче

(ТАСС Парижран тата Барселонăран пĕлтернисем тăрăх)

Центрти фронт

Мадрид патĕнчи Университет городокĕнче йулашки кунсенче республиканĕцсем темиçе минă сиктерсе йанă. Хире-хирĕç хĕрӳлĕн персе тăнă.

Фашиссен артиллерийĕ Мадридăн хĕвелтухăç йенчи кварталĕсем çине пенĕ. Декабĕрĕн 21-мĕшĕнче пăлхавçăсен артиллерийĕ Мадридăн хĕвеланăç йенчи кварталĕсем çине пенĕ Гражданла халăх хушшинче темиçе çын аманнă.

Декабĕрĕн 21-мĕшĕнче ытти фронтсенче улшăнусем пулман.

* * *

Италипе Германин 60 йахăн бомбардировщикĕ декабĕрĕн 21-мĕшĕнче [illegible] Таррега, Таррагонă, Гранера, Борхас, Бланкас т. ыт. хулисем çине бомбăсем пăрахнă. Манресра 8 çын вилнĕ, 53 çын аманнă, вĕсем пурринчен ытла хĕрарăмсемпе пĕчĕк ачасем. 16 çурт ишĕлнĕ.

Еспань агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Италин разведкă самольочĕ „Ромео“ декабĕрĕн 20-мĕшĕнче Сагунто порчĕ çине пырса 8 бомба пăрахнă, анчах вĕсем нимĕнле сийен те кӳмен.

Гавас агентстви пĕлтернĕ тăрăх, фашиссен 5 самольочĕ Альмери районĕнчи Альказар çине 50 бомба пăрахнă. 17 çын вилнĕ, 28 çын аманнă, 30 çурт ишĕлнĕ.

Декабĕрĕн 21-мĕшĕнче ирхине Германин 20 бомбардировщикпа 20 истребителĕрен тăракан темиçе ескадрилйи Барселонă таврашĕнчи Вильйалонга тата Вальтс йалĕсем çине нумай бомбăсем пăрахнă. Вильйалонгăра бомбăсем тивнипе темиçе çурт çĕмĕрĕлнĕ, шкул патĕнчен темиçе метрта пулнă çичĕ çулти тата вунă çулти икĕ хĕрача вилнĕ.

Англин Сан-Себастйанри консулне арĕсленĕ

ПАРИЖ, декабĕрĕн 22-мĕш. Хаçатсем Испанири фашисла пăлхавçăсен влаçĕсем Англин Сан-Себастйанри консулне Гудмана арĕслени çинчен пĕлтереççĕ.

„Се суар“ хаçатăн Лондăнри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, фашисла пăлхавçăсем Гудман патĕнче обыск тунă чух фашисла пăлхавçăсемпе интервентсен Сегре шывĕ çинче (хĕвелтухăç фронтĕнче) наступлени тума палăртса хунă планне тупнă имĕш. Пăлхавçăсен влаçĕсем пĕр хыпарсем тăрăх, Бургоспа Сан-Себастйанра 200 çынна арĕсленĕ, тепĕр хыпар тăрăх—1.000 çынна. Арĕсленисем хушшинче Франко генералăн çарĕнчи темиçе офицер, вăл шутрах пăлхавçăсен генеральнăй штабĕн офицерĕсем те пур.

Еспань агентстви корреспонденчĕ: Англи консулĕ патĕнче тупнă документсем вăрçă ĕçĕвчи секретлă йапаласем мар, вĕсем „Испанири економикăлă тата политикăлă лару-тăру çинчен çырнă йаланхи пек доклад кăна“ пулса тăраççĕ, тесе пĕлтерет.

(ТАСС).

Испанири пăлхавçăсен тылĕнчи пăлханусем

ПАРИЖ, декабĕрĕн 22-мĕш. Еспань агентстви Андайран (Франции кăнтăр пайĕ) çапла пĕлтерет: Испанири фашиссем йышăннă районсенче йулашки вăхăтра пăлханусем пулса пыраççĕ, пăлханусем çинчен чикĕ урла нимĕнле сведĕнисем те ан кăсса кайччăр тесе, Испанири фашисла пăлхавçăсен влаçĕсем мĕн кирлине йăлтах тăваççĕ. «Çак пăлханусем,—тет агентствă,—Франко генерала хирĕç халиччен пулнă пĕтĕм выступленисенчен те пысăкрах. Фашисла пăлхавçăсен чикĕ хĕрринчи хуралĕн постисене Франци чиккисем патĕнчен Испани территорийĕ çине 1 километр шалала куçарса тăратнă. Çапла вара, чикĕ хушшипе фашиссен чикĕри хуралĕ хушшинче пулса тăнă пушă вырăн çине фашиссен пулемечĕсем тĕллесе тăраççĕ, унăн урлă никам та каçса кайма пултараймаст. Францин чикĕ хĕрринчи районĕнчи хресчĕнсем халиччен йаланах хăйсен выльăхĕсене чикĕ урлă хуса каçарма пултарнă, халь вĕсене, хăйсен выльăхĕсемпе пĕрле, Испани территорийĕ çинче пăлхавçăсен влаçĕсем тытса чарнă Вĕсене Францине таврăнма ирĕк памасăр тытса тăраççĕ.“

Еспань агентстви малала çапла пĕлтерет: унтан илнĕ сведĕнисем тăрăх, фашисла генерала Авидова (пăлхавçăсен охранкин начальникĕ, пĕр фалангис вĕлерме тапăннă, ăна çĕçĕпе чиксе амантнă. Декабĕрĕн 20-мĕшĕнче фашисла пăлхавçăсен влаçĕсем Ирунра (Франци чикки патĕнче) 50 çынна арĕсленĕ.

(ТАСС).

Пан-Американски конференцире

Лимăран (Перу столици) пĕлтернĕ тăрăх, паллăрах çĕршывсен делегацийĕсем Америкăри çĕршывсем пĕр-пĕрипе килешӳлĕ пулни çинчен деклараци йышăнма килĕшнĕ. Çак декларацине Аргентинă делегацийĕ çине тăрса сĕннине килĕшӳлĕн, пĕтĕмĕшлĕ сăмахсемпе çырнă.

Конференцире пурте пĕр шухăшлă пулнă пек кăтартас шутпа пулмала, Хелл „Америкă мар çĕршывсем йенчен пулакан агреççине“ хирĕç деклараци йышăнтарма çине тăрса сĕнме пăрахнă. Йышăннă деклараци, хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, кирек мĕнле агреççине те хирĕç тăма кăтартвипе пĕрлех, Латин-Америкă çĕршывĕсене хирĕç Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсем йенчен те агреççи пулма пултарассине кăштах палăртса хăварнă. Çакăн пек çырни вăл Аргентинă делегацийĕшĕн килĕшӳлĕ, мĕншĕн тесен вăл конференцире: Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсем малашнехи вăхăтра „ырă кӳршĕлĕ политикă тытса тăрассине“ пăрахса „Латин-Америкă çĕршывĕсене хирĕç агреççилĕ политикă“ йенне çаврăнса тăма пултарасран хăранă пек пулса каланă. Деклараци, агреççи пулас мĕн пулсан, Америкăри çĕршывсем хушшинче консультаци пулмалине палăртса хурат, çавăнпа пĕрлех, кашни çĕршыв хăй пĕлнĕ пек тума ирĕклĕ пулассине кăтартат.

(ТАСС).

500 тенкĕ выльăса илнĕ

Шупашкарти Водопйавăв йачĕпе таракан тир-сăран комбинатĕнчи рабочи Александр Асафйĕв йулташ ССР Союзĕн Оборонине Тереклетмели Займ облигаципе 500 тенкĕ выльăса илнĕ.

Займ облигацисемпе выльăса илнисем комбинатра татах та пур.

И. Федăрăв.

О х а х у л и

1927 çулти çентабĕр уйăхĕн пуçламăшĕнче Уркт заливне пăрахут пырса кĕнĕ. Сахалин утравĕн пушă çыранĕсене 50 çын анса йулнă. Вĕсем Оха хулине тума пынă малтанхи строителсем пулнă. Вăл хула вара кайарахна Инçет Хĕвелтухăçĕнчи нефт промышлĕннăçĕн центрĕ пулса тăнă.

1928 çулти февральре хăма савăчĕ ĕçлеме пуçланă. Унăн тавра бараксем ӳсе ларнă, пĕр пысăк çурт туса лартнă. Унта „Сахалиннефть“ трестĕн управлени вырнаçнă. Çентабĕр уйăхĕнче малтанхи скважинăна туса пĕтернĕ. Октаберти Социалисăмлă Аслă револьуцин уйавĕ тĕлне çакăнта нефт кăларма пуçланă.

Охари нефт промысли пĕтĕмпех йĕркене кĕрсе çитет. Çакăн пек пуçланса кайнă Оха поçолки. Халĕ ăна РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕн указĕ тăрăх хула туса хунă.

Хула витĕр аслă урам—Ленин урамĕ тухат. Кунта: почтă, телеграф, банк, „Сахалиннефть“ трестăн управлени çурчĕ. Хулара Советсен çурчĕ, кинотеатр, 14 шкул. Вăл шкулсенче 4.000 ача вĕренет. Тĕрлĕрен курссем, нефт техникумĕ, пульницăсем, амбулаторисем, ача çуратмали çуртсем ĕçлеççĕ.

Хула ӳсет. Унăн çыннисем те ӳсеççĕ. Охари промыслана малтанхи вăхăтра бурильщик пулнă Байрамăв йулташ йертсе пырат.

Промысласенче çĕршер пин тоннă нефт кăлараççĕ.

(ТАСС).

Вăрçăлă Турăсăрсен Союзĕн Чăваш Совечĕн III-мĕш пленумĕ

Декабĕрĕн 21—22-мĕшĕсенче Вăрçăлă турăсăрсен союзĕн Чăваш Совечĕн III-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум Вăрçăлă турăсăрсен союзĕн республикăри организацин 1938 çулти ĕçĕсем çинчен Чăваш Совет доклачĕпе ревизи комиççи содокладне итлерĕ.

Пленумра тухса калакансем хăйсен сăмахĕсенче Парти Чăваш Обкомĕнче ларнă халăх тăшманĕсем тĕне хирĕçле пропагандă ĕçне партилĕ пропагандăран уйăрма тăрăшни çинчен, ĕненекенсем хушшинче ĕçлессине пур майсемпе те чăрмантарса пыни çинчен чарăнса тăчĕç.

Комсомол, профсойуз организацисем тата çутĕç оргăнĕсем тĕне хирĕçле пропагандăна сарас ĕçе тивĕçлипе хутшăнмаççĕ. Комсомолăн Кувакинă райкомĕ тĕне хирĕçле пропагандăна лайăхлатас тĕлĕшпе турăсăрсен союзĕн районри совечĕ пулăшу пырса ыйтасса кĕтет. Комсомолăн Канаш райкомĕ тĕне хирĕçле ĕçе вак-тĕвек ĕç вырăнне шутлат. Улатăр райкомĕ пирки те çавнах каламала.

Верховнăй Советсене суйланă вăхăтра тĕне хирĕçле пропагандă *чылай аван пынă пулсан, халь çак* ĕç пур районсенче те йăвашланнă. Çакăнпа усă курса йулашки вăхăтра чиркӳ çыннисемпе çектантсем, кулакла елементсем хăйсен тăшманла ĕçĕсене уççăнах туса пыма пуçланă. Анчах Вăрçăлă турăсăрсен союзĕн Чăваш Совечĕ, çавăн пекех районри советсем те, халăх хушшинче тĕне хирĕçле большевикла пропагандăна сарса йарса çектантсен киревсĕр хăтланăвĕсене çапса аркатас тĕлĕшпе кирлĕ пек ĕçлесе пыман.

Вăрçăлă турăсăрсен союзĕн Чăваш Совечĕн аппаратне çирĕплетсе çитермен. Чăваш Совет преçседателĕ Аникин йулташ ĕçлем пекки çеç туса пынă, ытти работниксене пулăшман. Организаци ĕçне лайăхлатас вырăнне, Вăрçăлă турăсăрсен союзĕн Тĕп Советне суйа сведĕнисем парса ăлпланса ларнă.

Чăваш Совечĕн иртнĕ пленумсен решенийĕсене пурнăçласа пыман, тĕне хирĕçле пропагандă ĕçĕнче тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкине пĕтерес тĕлĕшпе ĕçлемен.

Пленумра тухса калакансем тĕне хирĕçле пропагандă кадрĕсене вĕрентес ĕç йапăх пынине, активпа ĕçлеменнине палăртрĕç.

Пленум хăйĕн резольуцийĕнче Вăрçăлă турăсăрсен союзĕн йачейкисене организаци тĕлĕшĕнчен çирĕплетме, ĕненекенсем хушшинче ĕçлессине, кадрсем хатĕрлессине лайăхлатма, районри советсен ĕçĕсене çĕнетме, Чăваш совет аппаратне çирĕплетме йышăнса хăварчĕ.

Пленум Аникин йулташа Вăрçăлă турăсăрсен союзĕн Чăваш совет преçседателĕнчен хăтарса, ун вырăнне Çеменăв йулташа суйласа хăварчĕ.

★

Тӳрлетни

„ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕн“ Х-мĕш сыпăкри 2-мĕш разделра („Чăваш Коммунĕ“ хаçатăн кăçалхи нойаберĕн 22-мĕшĕнче тухнă номĕрĕнче) тăваттăмĕш абзац вĕçĕнче йăнăш кайнă. „...унта частник тӳпи çав хушăрах 6 процентран 5 процента çити чакнă“ тенине 9 процентран 5 процента çити чакнă, тесе тӳрлетмеле.

Ответлă редактăр И. М. ÇЕМЕНĂВ.

Чăваш АССР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕн тĕп дезостанцийĕ, 1938 çулти декаберĕн 26-мĕшĕнчен пуçласа 1939 çулти йанварĕн 1-мĕшĕ хушшинчи вăхăтра

ПРОФИЛАКТИКĂЛĂ САНОБРАБОТКĂ ТАТА ДЕЗИНФЕКЦИ ТУМА

ДОГĂВАРСЕМ ТĂВАТ.

Хулари организацисемпе предприйатисен, шкулсен, сыватакан учрежденисен хăйсен представителĕсене, доверенностьпа, догăварсем тума йамала.

АДРЕС: г. Чебоксары, Ново-Попеиечная ул., д. № 16, Телефон № 5—99

МЕДИЦИНĂ РАБОТНИКĔСЕМ,
ПУЛЬНИЦАСЕМ, МЕДПУНКТСЕМ,
РАЙОНСЕНЧИ СЫВЛĂХ ПАЙĔСЕМ,

А С Т Ă В Ă Р!

Медицинă журналĕсене 1939 çулшăн çырăнса илмели срука тăснă

Медицинă журналĕсене КОГИЗ-ăн Шупашкарти, Улатăрти, Канашри, Патăрйелĕнчи, Çĕмĕрлери, Çĕрпӳри, Йетĕрнери, Сĕнтĕрвăрринчи, Куславкккари магазинĕсенче çырăнса илме

В А С К Ă Р!

Журналсен каталогĕсем районсенчи сывлăх пайĕсенче тата КОГИЗ ăн магазинĕсенче пур.

Заказсене, укçа куçарни çинчен квитанцине пĕрле хурса, çак адреспа йарăр: г. Чебоксары, ул. М. Горького, 5, КОГИЗ.

КОГИЗ ăн Чăваш республикĕнчи отделенийĕ.

[illegible] № 590

Гор. Чебоксары, типография № 1 Местпрома ЧАССР., заказ № 881

ф. 6. 58×84 п. л: